24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
АВГУСТ
14
КĔÇНЕРНИКУН
190 (5905) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

Кĕрхи тырăсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа акса хăварар

Республикăн кăнтăр енчи районĕсенче хăшпĕр колхозсем ыраш вырса пĕтерчĕç. Çав хушăрах государствăна çенĕ тырă пама пуçланă колхозсен йышĕ те кунран-кунах ӳссе пырать. Августăн 5-мĕшĕнче Иĕпреçри хатĕрлев пунктне колхозсенчен малтанхи обозсем тырăпа пынă. Виçĕртри «Хунав» колхоз членĕсем (Комсомольский р.) ыраш вырса пĕтернĕ кунах государствăна пама тата вăрлăхлăх авăн çапма пуçланă.

Элĕк районĕнчи ĕçе лайăх организацилеменĕ колхозсем кĕрхи тырăсене акма тухнă. 66 колхозăн малтанлăха акмаллăх иртнĕ çулхи вăрлăхсемех çитеççĕ. Вăрлăхсен пахалăхĕ лайăх. Кивĕ вăрлăх çителĕксĕр тытакан колхозсем çенĕ тырра çапма тытăнчĕç. Сеялкăсем çинче ĕçлеме уйăрнă колхозниксен пĕлӳлĕхĕсене ӳстерес шутпа пурне те кĕске сроклă курс витĕр вĕрентсе кăларнă. Çакă ĕнтĕ кĕрхи тырăсем акнă чухне агротехникăн пур требованийĕсене те тĕрĕс пурнăçлама май парать.

Куславкка районĕнчи колхозсем те кĕрхи тырăсем акмалли çĕр лаптăкĕсене васкасах хатĕрлеççĕ. «Коммунист» «Кызлкуч», «Канаш», «Искра» тата «Красная заря» колхозсем кĕракине тухма пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Çак колхозсен вăрлăхсем пысăк пахалăхлă. Сеялкăна ĕçлеме пур колхозсенче те икшер çын тата икшер лаша уйăрнă. Кĕрхи тырăсене акнă çĕрте районра 193 сеялка ĕçлемелле, вĕсем пурте юсавлă.

Халĕ ĕнтĕ пур колхозсенче те хĕрсех кĕрхи тырăсем акма тытăнмалла. Кĕракине кая юлса тухнин кашни кунĕ тырпул тухăçлăхне чакарать. Апла ан пултăр тесен, августăн 25-мĕш тĕлне пур колхозсенче те кĕрхи тырăсене акса пĕтермелле. Мĕншĕн тесен çак вăхăтра акса хăварнă тырă тухăçлăрах пулать. Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн опытлă участокĕнче темиçе çул хушши сăнаса пынă тăрăх, августăн 22-мĕшĕнче акнă кĕрхи тулă кашни çулах пысăк тухăç панă. Çавăнпа та, лайăх вăхăта ирттерсе ярас пулмасть, хатĕрленӳ ĕçне халех вĕçлесе çитерес пулать. Акмалли çĕр лаптăкĕсене лайăх ĕçлесе кăпкалатмалла. Вăрлăхсем пысăк пахалăхлă пулмалла, вĕсене пĕтĕмпех протравить туса акас пулать. Иртнĕ çулхи вăрлăх, çавăн пекех кăçалхи те, мĕнле шăтнине тĕрĕслесе пăхмалла. Çавăн пекех, мĕнле тăпра çине мĕн чухлĕ вăрлăх акмалли çинчен сеялщиксене лайăх ăнлантарса памалла. Кирлĕ виçене акни калчана пĕр тикĕс тата пур çĕрте те пĕр пек хисеппе шăтма май парать.

Вăрлăха пĕр палла виçеллĕ тарăнашне витĕнтерсе хăварма пĕлни те тырпул тухăçлăхне хăпартас ĕçре пысăк выран йышăнса тăрать. Çак ыйту çине колхоз бригадирĕсемпе колхоз председателĕсен уйрăмăнах вăйлăн çавăрăнса пăхни кирлĕ. Иртнĕ çулхине Ишлейри машинно-тракторлă станцинче ĕçлекен пĕр тракторист Тойдерек колхозĕнче кĕраки тунă чухне сеялка сошникĕсене ытлашши тарăн ярса акнă пирки тырă пачах шăтса тухайман пулнă. Çакăн пек тĕслĕхсем кăçал пулмалла мар, кашни сеяльщик хăйне хушнă ĕçшĕн ответлă пулса ĕçлетĕр. Ĕçре брак пулмалла мар.

Иртнĕ çуракинче пирĕн колхозсем машинăсемпе туллин усă курса ĕçлерĕç. Ун чухне кашни сошник пуçне кунĕпе пĕр гектар е ытларах та акнă. Çак опытсемпе кĕрхи тырăсене акнă çĕрте те анлăн усă курма пĕлмелле. Сеялкăсене пĕр вăхăтлăха та ĕçлемесĕр лартас пулмасть, кашни сеялкăпа икшер смена ĕçлемелле. Сеялкăсем сумне икшер смена ĕçлемеллĕхех çын вăйă тата лащасем уйăрса парас пулать. Колхоз председателĕсемпе çĕрĕç работникĕсен кĕраки тумалли çĕр лаптăкне пĕтĕмпех машинăпа акса хăварассишĕн кĕрешмелле. Пĕр гектар та алăпа акмалла мар.

Пирĕн республикăра кашни сошник пуçне, вăтам шутпа, 5,3-шер гектар тивет. Ĕçе тĕрĕс организацилесен, кĕрхи тырăсене кĕске срокрах акса хăварма пултаратпăр. Кĕрхи тулăна акма тухсан малтанхи ик-виçĕ кунра акмалла. Вăрлăх хатĕр мар тесе тулă акассине кая хăварма юрамасть. Вăрлăхсем ĕнтĕ пур колхозсен те хатĕр пулмалла. Паллах, çак ответлă ĕçре çĕрĕç организацилесен, кĕрхи тырăсене кĕске срокрах акса хăварма пултаратпăр. Кĕрхи тулăна акма тухсан малтанхи ик-виçĕ кунра акмалла. Вăрлăх хатĕр мар тесе тулă акассине кая хăварма юрамасть. Вăрлăхсем ĕнтĕ пур колхозсен те хатĕр пулмалла. Паллах, çак ответлă ĕçре çĕрĕç организацилесен тата агрономсен колхозсенчи ĕçе тĕрĕс организацилеме пулăшмалла. Агрономсен ĕçĕ халь уйра, колхозниксем ĕçленĕ çĕрте пулмалла. Унта вĕсен агротехникăн пур требованийĕсене те тĕрĕс пурнăçлама вĕрентмелле.

Кăçалхи çул кĕртырри акмалли çĕр лаптăкĕ чылаях ӳсмелле. Пирĕн республикăн иртнĕ çулхинчен чылай нумайрах ыраш акса хăварма пуçлать. Çавăнпа та кашни колхозăн кĕраки туса хăварма пултаратпăр. Кĕрхи тулăна акма тухсан малтанхи ик-виçĕ кунра акмалла. Вăрлăх хатĕр мар тесе тулă акассине кая хăварма юрамасть. Вăрлăхсем ĕнтĕ пур колхозсен те хатĕр пулмалла. Паллах, çак ответлă ĕçре çĕрĕç организацилесен, кĕрхи тырăсене кĕске срокрах акса хăварма пултаратпăр. Кĕрхи тулăна акма тухсан малтанхи ик-виçĕ кунра акмалла. Вăрлăх хатĕр мар тесе тулă акассине кая хăварма юрамасть. Вăрлăхсем ĕнтĕ пур колхозсен те хатĕр пулмалла. Паллах, çак ответлă ĕçре çĕрĕç организацилесен тата агрономсен колхозсенчи ĕçе тĕрĕс организацилеме пулăшмалла. Агрономсен ĕçĕ халь уйра, колхозниксем ĕçленĕ çĕрте пулмалла. Унта вĕсен агротехникăн пур требованийĕсене те тĕрĕс пурнăçлама вĕрентмелле.

Кăçалхи çул кĕртырри акмалли çĕр лаптăкĕ чылаях ӳсмелле. Пирĕн республикăн иртнĕ çулхинчен чылай нумайрах ыраш акса хăварма пуçлать. Çавăнпа та кашни колхозăн кĕраки туса хăварма пултаратпăр. Кĕрхи тулăна акма тухсан малтанхи ик-виçĕ кунра акмалла. Вăрлăх хатĕр мар тесе тулă акассине кая хăварма юрамасть. Ытти культурăсенчен пушаннă çĕр çине акнă ыраша çĕрĕк тăприне тата торфпа мульчированă туса, çавăн пекех тата кали, фосфорит çăнăхĕсемпе кĕркунне апат парса хăварас пулать. Çакă вара акнă тырпула лайăх хĕл каçма пулăшать.

Кĕраки — государствăллă пысăк ĕç пулса тăрать. Ана вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерни çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешни пулать. Халĕ кашни колхозник, хăйĕн вырăнĕнче тӳрĕ кăмăлпа тата ĕç вăхăчĕпе туллин усă курса ĕçлесе, паттăр Хĕрлĕ Çара тата оборона валли ĕçлекен рабочисен нумай миллионлă çарне кирлĕ таранах тырпул парса тăма тăрăшать. Колхозниксем ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата кăтартуллă туса пыраççĕ. Вĕсем халь пурте пĕр шухăшпа — тĕван çĕршыв валли ялхуçалăх продуктисем ытларах туса илсе фашистла вăрă-хурахсене хăвăртрах çапса салатас туйăмпа пурăнаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ, чылай колхозсем кĕрхи тырăсене акма лайăх хатĕрленсе тухрĕç, вĕсем кĕракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса хăварассишĕн кĕрешеççĕ.

Хĕрлĕ Çăран высшии начальство составне çар званийĕсем парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăнать:**

Хĕрлĕ Çăран высший начальство составĕнчи çынсене ССР Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти майăн 7-мĕшĕнче кăларнă Указпа çирĕплетнĕ çар званийĕсем парас.

ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ ÇАКСЕНЕ ПАРАС:

1. **Подлаз** Кузьма Петрович
2. **Смирнов** Андрей Николаевич
3. **Ведюнинский** Иван Иванович
4. **Багряман** Иван Христофорович
5. **Калинин** Николай Васильевич.

ТАНКОВАЙ ВОЙСКАСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ ÇАКНА ПАРАС:

1. **Соломатин** Михаил Дмитриевич.

ТЕХНИЧЕСКИ ВОЙСКАСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ ÇАКНА ПАРАС:

1. **Петухов** Дмитрий Ефимович.

ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль.
1941 çулти августăн 12-мĕш.

Совет самолечĕсем Берлин районĕ çине пырса тапăнни

Августăн 11-мĕшпе 12-мĕш хушшинче çĕрле совет самолечĕсем Берлин районĕнчи вăрçă объекчĕсем çине вĕçсе пынă.

Вут чĕртекен тата фугаслă хăватлă бомбăсем пăрахнă. Берлинра пушар-сем тата взрывсем пулнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене тавăрăннă. Унченхи вĕçевреи каялла тавăрăнман самолетăн экипажне шыраса тупнă, вăл хăйĕн базине тавăрăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Августăн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Августăн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем Кексгольм, Сольцы, Смоленск, Коростень тата Умань енĕсенче çĕрпех противника хирĕç çапăçнă.

Фронтăн ытти енĕсемпе участокĕсенче пысăк çапăçусемех пулман.

Пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсемпе пĕрле кĕрешсе, противникăн çапăçу хирĕнчи мотомехчаçĕсемпе пехотине пыра-пыра çапнă тата аэродромĕсенче унăн авиацине атакăланă.

* * *

Коростень енчи Р. районĕнче, авиаци, танксем, артиллери тата стрелковăй подразделенисем пĕрле пырса çапнипе, фашистсен танкĕсен пысăк колоннине çĕмĕрсе тăкнă. Противник çине атака тума старший лейтенант Горинăн подразделенийĕнчи пĕтчиксем пуçланă. Малтанхи хут тапăнсах, Совет бомбардировщикĕсем противникăн малти танкĕсене пĕтерсе тăкнă тата горючи тултарнă цистернăсемпе боеприпассем тиенĕ машинăсене взрыв туса сирпĕтсе янă. Колоннăн стройĕ пăсăлса кайнă. Çак вăхăтра капитан Ильинăн дивизионĕнчи йывăр орудисем нимĕçсене перес çĕмĕрме пуçланă, çав орудисенчен тĕл пеме старший сержант Гуссейнов самолечĕ лайăх кăтартса тăнă. Артиллеристсен перес тăнă пирки тата авиаци тăтăшах тапăннă пирки пысăк çухатусем туса, фашистсен танкĕсем тарма пуçланă. Ж. ялĕ патне пыракан çул çинче нимĕçсен машинисене хирĕç лейтенант Ягузов подразделенийĕнчи танксене пĕтерекен боецсем тата противотанковăй тупăсем çапăçма тытăннă. Колоннăна çĕмĕрсе тăкассине пирĕн йывăр танксем вĕçленĕ. Шоссе тăрăх 10 километр хушшинче нимĕçсен сирпĕтсе, сунтарса янă тата çĕмĕрсе тăкнă машинисем йăванса выртаççĕ. Нимĕçсен 50 ытла танкĕсене, вăл шутрах 15 йывăр танкне, зенитнăй орудисен икĕ батарейине, 12 зенитнăй пулеметсене, 8 автомашина тата 15 мотоцикл çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

К. юханшывĕ урлă каçнă çĕрте полковник Крутов чăсĕн боецĕсем нимĕçсен пехотнăй батальонне атакăланă, çав батальона артиллерин пĕр дивизионĕ тата нумай минометсем пулăшса тăнă. Атака пуçланас умĕн пирĕн енчи сыранра нимĕçсен пĕр ротăна яхăн салтаксем пулнă. Штык вĕçĕн хăюллăн пырса çапса, пирĕн боецсем фашистсен ротине хăваласа янă. Тăшмана çĕмĕрсе, лейтенант Люсин роти тăшман хатĕрленĕ понтоннăй кĕпер тăрăх юханшыв урлă каçнă та тăшман сыранĕнче çапăçма пуçланă.

Люсин юлташăн ротинчи боецсен наступленине чарса лартма тата вĕсене çавăрса илме хăтланса, нимĕçсем икĕ орудине çыран хĕрне илсе пынă, унтан тӳрех персе понтоннăй кĕпере çĕмĕрсе тăкнă. Старший политрук Голиков ертсе пынипе нумай красноармеецсем ишсе каçнă, вара тăшмана фланран пырса çапнă. Çавăрса илессерен хăраса, противник каялла чакма тытăннă, ун çине Совет артиллерийĕ персе тăнă. Çак вăхăтра пирĕн сапер-сем понтоннăй кĕпер туса лартнă. Люсин юлташ ротине пулăшма ытти подразделенисем пырса çитнĕ. Флангсенчен тата тӳрех пырса çапса противника пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă. Старший лейтенант Маринăн кавалери эскадронĕ тата çăмăл танксем тарма тытăннă фашистсене пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çын вилсе юлнă. 370 çына тыткăна илнĕ. 12 тупă тата гаубицăсем, 14 миномет, боеприпассем тиенĕ 18 автомашина, бензин тиенĕ 7 машина, консервăсем тиенĕ 4 лав тытса илнĕ.

* * *

Васильев юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ нимĕçсен генеральне ярса тытнă, çав генерал çăмăл машинăна авари пулнă пирки Л. ялĕнче чарăнса тăнă пулнă. П. ялĕ патĕнче партизансем засада тунă та нимĕçсен 2 лейтенантне персе вĕлернĕ. Отряд П. станцийĕ патĕнчи чугунçул кĕперне çĕмĕрсе антарнă, çав кĕпере фашистсем 5 кун хушши юсанă пулнă. Кившык юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ тăшманăн хăйсен чăсĕнчен тăрса юлнă 2 танкне сыхласа тăрса ярса илнĕ тата нимĕçсен 7 мотоциклистне пĕтерсе тăкнă.

Знаменский юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ фашистсен чăсĕн штабĕ çине хăюллăч тапăннă. Отряд боецĕсем тăшманăн танкне, 5 салтакне тата 4 офицерне пĕтерсе тăкнă, штабăн 2 машинине тытса илнĕ. М. ялĕнче партизансем нимĕçсен 20 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ тата 2 грузовой машина, 2 станковăй пулемет туртса илнĕ.

Яковенко юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ чугунçул çинчи Н. разъезда ярса илнĕ. Нимĕçсем разъезда илсе пынă оборудованисене тата куçса çӳрекен состава пĕтерсе тăкнă чухне, партизансем станци патне нимĕçсен çар эшелонĕ пынин çинчен тĕлнĕ. Эшелона хирĕç отряд командирĕ нимĕçсен çак станцинчи паровозне янă. Паровоз состав çине пĕтĕм вăйпа пырса тăрăннă. Поезд рельсăран тухса йăванса кайнă, 15 вагона пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсем юнлă террор туса пыраççĕ пулин те, Голландри халăхĕ Германи валли продукци кăларакан предприятисен ĕçне чăрмантарса пырать. Çак кунсенче А. хулинчи машинăсем тăвакан пысăк заводра машина отделенине варăм туса сирпĕтсе янă. Пĕр эрне хушши заводăн цехĕсем ĕçлемесĕр ларнă. Д. хулинчи электростанцинче пысăк авари пулса иртнĕ, çак хулара вăрçă хатĕрĕсем тăвакан темиçе завод пур. Электростанцин генераторĕсене çĕмĕрнĕ пулнă, вĕсене темиçе кун юсама тивнĕ. Л. хулинчи сукно фабрикинче хатĕр продукцисен складне вут тĕртсе сунтарса янă, çав продукцине нимĕçсем тепĕр кун иртнĕ хыççăн Германине яма шутланă пулнă. Голландири патриотсем Германин зенитнăй орудисемпе автомашинăсем тиенĕ эшелонне Апелдорн тата Девентер хулисем хушшинче рельсăран кăларса тӳнтерсе янă.

Германин Голландири оккупацийлĕ влаçĕсем çĕршыври антифашистла движенине хаяр репрессисемпе пусарса лартма ахалех тăрăшаççĕ. Юлашки вăрçă хушшинче нимĕçсен вăрттăн полицийĕ, гитлеровецсене хирĕç диверсиллĕ ĕçсем организациленĕ тесе айăпласа, Голландири рабочисемпе служащисене 500 çынна яхăн арестленĕ. Амстердамри пĕр авиаци предприятийĕнче нимĕçсем пур рабочисене те шăматкунсенче тата вырсарникунсенче сверхурочнă ĕçлеме ирĕксĕрлесех хушнă тата тăтăшах саботаж тунăшăн рабочисене нимĕнле отпусксăр тăратса хăварнă.

* * *

Ылханлă фашистла пусмăра хирĕç Франци халăхĕ хăюллăн та хастарлăн кĕрешет. Н. хулинче нимĕçсен 400 автомашинине стройран кăларнă. М. хули патĕнче нимĕçсен продовольстви тиенĕ поезчĕ крушени тӳснĕ, 14 вагон çĕмĕрлесе пĕтнĕ. С. хулинче 4 километр хушшинчи телефон линине татса пĕтернĕ. П. хулинче нимĕçсен вылăх апачĕ хунă икĕ пысăк сарайне сунтарса янă. Сарайсем тăватă талăк хушши çуннă. Медон вăрманĕнче нимĕçсен патронсем хунă складне взрыв туса сирпĕтсе янă. Понтуаз хулинче рабочисем оккупантсене хирĕç ӳçĕхах восстани туса ирттернĕ. Восстани тунă французсене хирĕç фашистсем пăшалсенчен пеме пуçланă. Пĕр рабочине вĕлернĕ, темиçе рабочине амантнă. Нумаях та пулмасть нимĕçсем Парижри рабочие Андре Массерона персе вĕлернĕ, вăл Германин офицерне, Франци хĕрарăмĕсенчен măшкăлланăскерне, çапнă пулнă. Жювизи хулинче французсем нимĕç офицерне хĕненĕ пулнă. Фашистсем çакăншăн хулара пурăнакан кашни çын çинех 150 франк чухлĕ штраф хунă.

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатĕнче

Кăçалхи августăн 10-мĕшĕнче Совет Союзĕн Турцири посолĕ С. А. Виноградов юлташ Турцин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ г. Сараджоглу патĕнче пулнă тата Совет Правительстви хушшипе ăна çакăн çинчен пĕлтернĕ:

«Монтрере тунă конвенцине Совет правительстви пăхăнса пыни çинчен çирĕплетсе парать тата Турци правительствине проливсем тĕлĕшпе Совет Правительствин нименле агрессивлă шухăшсем те çук тесе шантарать. Совет Правительстви, Британи Правительстви пекех, Турци республикин территорине никам та тĕкĕнмелле маррине хисеплеме хатĕр тăрать. Турци правительствин вăрçа хутшăнас мар кăмăлне пĕтĕмĕшпех ăнланать пулсан та, çапах та Совет Правительстви, Британи правительстви пекех, Турци çине Европăри мĕнле те пулсан держава тапăнас пулсан, ăна киреклĕ мĕнле пулăшу пама та хатĕр тăнă пулăччĕ».

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатĕнчи сведенисем тăрăх, Великобритани Правительстви хушшипе августăн 10-мĕшĕнче Великобританин Турцири посолĕ те Турци правительствине çавăн çинченех пĕлтернĕ.

Польшăн СССР территоринче хупса усранă граждăнĕсене амнисти пани çинчен

ССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çулти августăн 12-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх, тытăкана лекнĕ çар çыннисене е вырăнлă урăх сăлтавпа СССР территоринче хупса усранă Польша граждăнĕсене пурне те амнисти панă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Августăн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Августăн 12-мĕшĕнче фронтра нимĕнле пысăк ĕçсемех те пулман.

Пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсемпе пĕрле кĕрешсе, противникăн мотомехчаçĕсене тата шехотине пыра-пыра çапнă.

Августăн 11-мĕшĕнче нимĕçсен 41 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 34 самолет пĕтнĕ. Тĕплĕн палăртнă тăрăх, нимĕç самолечĕсем августăн 11-мĕшпе 12-мĕш хушшинче çĕрле Мускав çине вĕçсе пынă вăхăтра нимĕçсен икĕ самолетне персе ӳкернĕ.

Балтий тинĕсĕнчи Хĕрлĕялавлă флотăн карапĕсемпе авиацийĕ августăн 11-мĕшĕнче противникăн 4 торпеднăй катерне тата икĕ транспортне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Чугунçул çинчи М. ятлă пысăк станци патĕнче темиçе кун хушши çапăçусем пынă. Çапăçусем пырас умĕн чугунçул узелĕ противник аллинче пулнă. Пирĕн разведка пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем станцине «СС» дивизине тата фашистсен «Викинг» дивизийĕн икĕ полкне танксемпе, артиллерипе тата минометсемпе пĕрле илсе пынă. Фронтăн çак участокĕнче кĕрешекен совет войскисен командованийĕ боевой задани илнĕ: Германи чăсĕсене М. станцинчен хĕссе кăлармалла та чугунçул узелĕн кăнтăр-хĕвеланăç енче çĕнĕ рубеж йышăнмалла. Çак задачăна пурнăçа кĕртессине Д. В. Аверин юлташ командир пулса ертсе пыракан соединени çине хунă.

Станцире çирĕпленсе ларнă нимĕç войскисем çине наступлени тăвасси тул сутăлас умĕн пуçланнă. Пирĕн соединенин артиллери батарейисем вăйлăн персе тăма тытăннă. Вăйлăн персе тăнипе усă курса, сылтăм флангри майор Фофонов ертсе пыракан чăсăн боецĕсем атака тумалли вырăна çывхарса пынă. Противник çине питех те хăвăрт пырса кĕрсе, вĕсем нимĕçсен оборонин малти линине татса кĕнĕ те станци патне пымалли çулсене йышăннă. Иккĕмĕш хут противник çине ывтăннă чухне Фофонов юлташăн чăсĕ станцине йышăннă. Çав вăхăтрах майор Солдатенко та — соединенин сулахай флангри чăсĕн командирĕ — çапăçу операцине питех те пултарулăн туса ирттернĕ. Вăл та хăйĕн боецĕсемпе станци патне пырса çитнĕ. Чугунçул узелне мухтавлă совет пехотинецĕсем йышăннă. Фашистсен суйласа илнĕ чăсĕсем каялла чакнă, вĕсем икĕ батальона яхăн пехота, 4 танк, 6 пысăк калибрлă пулеметсем тата нумай вооружени çухатса хăварнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 1.500 салтакĕ вилсе тата аманса выртса юлнă.

Икĕ кун иртсен нимĕçсем М. станцийĕ патне 68-мĕш çĕнĕ пехотнăй дивизие илсе пырса çапăçăва кĕртсе янă. Фашистсем совет войскисен сылтăм флангĕнчен кайса тыла кĕме тата чугунçул узелне тытса илнĕ чăсене уйăрса илме шутланă. Нимĕçсен маневрне вăхăтра туйса илнĕ. Нимĕç войскисен темиçе атакине сире-сире ярса, Аверин юлташ соединенийĕн чăсĕн вăйлăн контратака тума пуçланă, вара пысăк çитĕнӳ тунă. Паттăр пехотинецсем нимĕçсен 188-мĕш пехотнăй полкне пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă.

Нимĕçсен войскисене пĕтерес тĕлĕшпе çапăçусем кун хыççăн тата виçĕ кун пынă, çакăн хыççăн тăшманăн 68-мĕш пехотнăй дивизине пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă. Çапăçусем пынă вăхăтра противник «психикăллă атака» тенкеснерне туса шăхма хăтланнă. 188-мĕш пехотнăй полкри икĕ батальонăн, «СС» дивизин тата «Викинг» полкĕн ӳсĕр салтакĕсем, кĕлеткисене каçăртса, пирĕн позицисем патнелле пынă. Анчах психикăллă атака намăслăн пĕтсе ларнă. Гриднев тата Амаров капитансен батальонĕсен боецĕсем «психсене» сывăхах пыма май панă та пулеметсемпе винтовкăсенчен вăйлăн пеме пуçланă. Фашистсем хăраса ӳксе каялла тарма тытăннă. «Психикăллă атака» нимĕçсемшĕн питех те хаклă ларнă. Çапăçу хирĕнче фашистсен çĕршер салтакĕсемпе офицерĕсем вилсе тата аманса юлнă.

М. станци патĕнчи çапăçусенче нимĕçсен пĕтĕмпе 7.500 салтаксемпе офицерсем вилсе тата аманса юлнă, вĕсем 15 танк, тĕрлĕ калибрлă 27 оруди, виçĕ зенитнăй батарея, 24 миномет, 70 пулемет, 600 автомат тата ытти вооруженисем нумай çухатса хăварнă.

* * *

Н-ски чăсăн командованийĕ сыранри К. ялĕнче нимĕçсемпе румынсен салтакĕсен пысăк группи чарăнса тăнине шĕлнĕ. Çĕрле пирĕн катерсем ял патне тивĕç десантне илсе пынă. Тăшман патне пĕр шавăр çывхарса пырса, краснофлотецсем штык вĕççĕн атака тума тытăннă, тăшманăн гарнизонне çĕмĕрсе тăкнă. 200 салтаксемпе офицĕрсене тыткăна илнĕ, нимĕçсен хăвăрт перекен виçĕ туппине, 25 минометне, çĕршер винтовкăсемпе гранатăсем тата тăватă тупă туртса илнĕ.

* * *

Çапăçура красноармеец Середа уйрăмăнах пысăк паттăрлăхпа тавçăрулăх кăтартнă. Нимĕçсен танкĕ хăйĕн пулеметĕнчен персе тăрса пирĕн взвода малалла кайма кансĕрленĕ. Паттăр красноармеец тăшман танкĕ патне вăрттăн шуса пынă та хăвăртах ун çине хăпарса тăнă, пуртăпа вăйлăн çапса пулеметăн стволне кукăртнă. Взвод атакăна ывтăннă. Нимĕçсен танкне тытса илнĕ. Тепĕр çапăçура красноармеец Середа, разведкăра пулнă чухне, тăшман танкне гранатăсен çыхăпе персе çĕмĕрнĕ, пулеметран персе нимĕçсен 20 мотоциклистне персе ӳкернĕ тата виçĕ салтака тыткăна илнĕ.

* * *

Çак кунсенче М. хулинчи рабочисенчен йĕркеленĕ партизансен отрячĕ нимĕçсен фашистла войскисем туртса илнĕ К. мăнастăрки çине ăнăçлăн тапăннă. Вăйлă тĕтре пулнипе усă курса, партизансем плотсем çинче ларса юханшыв урлă ишсе каçнă та нимĕçсен кавалери чăсĕн штабĕ çине питех те нумай гранатăсем ывăтнă. Пулеметчик-партизансем мăнастăрки çăлли вырăнсене йышăнса утсем вырнаçса тăракан площадь çине вăйлăн персе тăма пуçланă. Çавăрса илеспен хăраса, противник мăнастăркăран хăвăртрах тухса кайнă, унăн 70 салтака яхăн вилсе тата аманса юлнă. Нимĕçсен чăсĕн штабне тата радиостанцине пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă.

Партизан-железнодорожниксем фашистсен фронт çывăхĕнчи çул çине илсе пынă подвижной составне ăнăçлăн стройран кăларaççĕ. Çак кунсенче Н. разъезчĕ çине Г. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ тапăннă. Партизансем нимĕçсен разъездри икĕ паровозне взрыв туса сирпĕтсе янă.

Нимĕçсене хирĕç пыракан çапăçусенче ялсовет членĕ, Пĕрремĕш Утлă çар кавалерисчĕ пулнă Семенчук юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ пысăк çитĕнӳсем тунă. Темиçе тапхăк çине пулеметсем лартса, партизансем фашистсем çине кĕтмен çĕртен тапăнаççĕ. Çак кунсенче конниксем нимĕç кавалерисчĕсен икĕ взводне çĕмĕрсе тăкнă. Икĕ пулемет, 8 автомат тата 82 лаша туртса илнĕ. Нимĕçсен 60 салтакне тата икĕ офицерне вĕлернĕ.

* * *

Кашни кунах рационализаторла тата изобретательле движени сарăлса пырать, вăл движенине вуншар та çĕршер пин совет патриочĕсем хутшăнаççĕ. Горькири Молотов ячĕпе тăракан автозавода юлашки кунсенче çĕршывăн оборона фончĕ валли çĕршер рационализаторла сĕнӳсем панă. Вĕсенчен 15-шĕ кăна çулталăкра 100 пин тенкĕ перекет тума май параççĕ. Дзержинский ячĕпе тăракан металлурги заводĕнчи пĕр цехри работниксем Квятковский, Диренко, Полонский юлташсем тата инженер Солохин юлташ магнитнăй сепаратор конструкцилесе хатĕрлесе ĕçе янă, çав сепаратор отходсенчен çулталăкра 20 пин тонна металл илме май парать. Орджоникидзери металлурги заводĕнчи мастерĕ Балабенко юлташ домна кăмакисенчи формăсене улăштарнă çĕрте çĕнĕ мелетпе усă курса, çав ĕçе тăвас вăхăта 5—6 минутăран икĕ минута çурăна çити чакарнă. «Ивторфмаш» заводри Косовой тата Шальгин юлташсем завод кăларакан машинăн конструкцине чылай улшăнусем кĕртнĕ. Çакă çулталăк пĕтиччен 1.179 пин тенкĕ перекетлеме май парать. Куйбышеври машиностроени заводĕнчи мастер Черканов юлташ оригиналлă конструкциллĕ фрез туса хатĕрленĕ, çав фрез метала нумай перекетлеме пулăшать. Вăл сĕннĕ тăрăх, сетка тунă çĕре каякан питех те дефицитлă хурçăна урăх, йӳнĕрех тăракан хурçăпа улăштарнă. Ярославскри «Пролетарская победа» заводри литейнăй цехăн çамрăк технологĕсем Колесникова тата Кузьменко юлташсем бронзăран шăратса кăларакан япаласем модельне улăштарма сĕннĕ. Çав сĕнĕве пурнăçа кĕртни бронзăна 15 процент сахалтарах тăкаклама май парать. Уралмашзаводăн строгальщицин Фесенко юлташ комбинированнăй резецпа ĕçлеме тытăннă, çапла майпа хăйĕн ĕçĕн тухăçлăхне темиçе хут ӳстернĕ. Ростов облаçĕнчи Мечетински МТС комбайнерĕ А. Степанов комбайн валли приспособлени туса хатĕрленĕ, çав приспособлени улăмпа пĕрле тĕп тырă тăкăнса çухалассине пĕтĕмĕшпех пĕтерет. Халĕ çак приспособлени Мечетински МТС-чи пур комбайнсен валли те туса хатĕрлеççĕ.

Япони парохочĕсене Сингапура кĕме чараççĕ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 12-мĕш. Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ситес уйăхра Япони парохочĕсем Сингапура кĕме чарăнаççĕ. (ТАСС).

Славян халăхесем кĕрешĕве çĕкленеççĕ

☆ ★ ☆

Мĕнпур славян халăхĕсен Мускаври митингĕ

Августăн 11-мĕшĕнче мĕнпур славян халăхĕсен митингĕн юлашки, иккĕмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларăва Украина писателĕ академик **Александр Корнейчук** уçнă.

— Германи вăрă-хурахĕсем акă ĕнтĕ икĕ çул хушши пирĕн авалхи славян çĕрĕсене юхăнтараççĕ, хуласене архатаççĕ, ялсене вут тĕртсе çунтараççĕ, —тет вăл.

Гитлер мирлĕ пурнăçа юратакан славянсен ирĕклĕ государствисене пĕтерсе тăкма, пирĕнтен чурасем туса хума, вĕлерсе пĕтерме шутларĕ. Фашистсем виçĕ миллион поляка асаплантарса вĕлерчĕç те ĕнтĕ. Çĕршер пин чехсен, сербсен, словенсен, Карпат украинецĕсем, хорватсен, черногорецсен, славянецсен юнĕ, пĕр Львов хулинче кăна асаплантарса вĕлернĕ 6 пин çынăн юнĕ, вырăс, украина, белорус халăхĕсен тата аслă Совет Союзĕнчи ытти халăхсен чи лайăх ывăлĕсем фашистла çарсене хирĕç пулса пыракан çапăçусенче юхтаракан юн, асаплантарнă пĕчĕк ачасемпе хĕрарăмсен куççулĕ пире, славянсене, эпир пурсăмăр та тарăхса курайман тăшмана — Гитлера тата унăн фашистла ордисене хирĕç пĕрлешме чĕнеççĕ.

Ирĕклĕхе юратакан Украина халăхĕ, пĕр çын пек пулса, фашизма хирĕç çапăçма çĕкленсе тăчĕ. Вырăссем, украинецсем, белоруссем аслă Совет Союзĕнчи ытти халăхсемпе суммасумăн тăрса, Гитлерăн суйласа илнĕ чи лайăх çарĕсене халех ĕнтĕ аркатса тăкмаллах пырса çапрĕç, Германи çарне никам та çĕнтереймест, текен юмаха тăрă шыв сине кăларчĕç. Фашистла ордасен ури айĕнче çĕр çунать. Вĕсене Хĕрлĕ Çăран паттăр чăсĕсем çĕмĕреççĕ, вĕсене мухтавлă партизансем çĕрĕн-кунĕн çĕмĕреççĕ, тăшмана пĕр минутăлăха та канăç памаççĕ. Кашни пуртре, кашни çуртра украинецсем тупа турĕç: ылханлă Гитлерăн чурисем пуличчен—вилни лайăхрах, терĕç вĕсем. Тăшман пирĕн ăнса пулакан тырпула илме килчĕ, анчах та вăл хăй туртса илнĕ Украина территорийĕсенче ылттăн тулăна мар тĕл пулчĕ, вăл хунта çунса кĕлленнĕ çĕре тата халăхăн хаяр тарăхăвне тĕл пулчĕ.

Тăвансем—славянсем! 40 миллионлă Украина халăхĕн ячĕпе эпĕ сире пирĕн чи хаяр тăшмана — немĕç фашисмне тата унăн вассалĕсене хирĕç таса кĕрешĕве пĕрлешме чĕнетĕп!

Фашизма—вилĕм!

Сăмах Польша писательницине **Ванда Василевскаяна** параççĕ.

— Поляксем,—тет вăл,—тăшман пирĕн çĕре юхăнтарса хăварчĕ. Поляк хресченĕ пурăннă ялсенчен вăл кĕлпе кăмăк туса хучĕ, рабочи тăрăшса ĕçленĕ хуласенчен—ишĕлчĕк купи туса хучĕ.

— Европăри ытти çĕршывсем тăрăх çăмăллăн утса тухнă пекех, совет çĕрĕ тăрăх та çавăн пек çăмăллăн утса тухасса шанса, Гитлер йăнăш турĕ. Кунта танк—танк сине, тимĕр—тимĕр сине, ăсĕр фашистла захватчиксен сухкăр вăйĕ—Хĕрлĕ Çăран ăнланулла та паттăр вăйĕ сине пырса тăрăнчĕç.

Хĕрлĕ Çăран героизмĕ, Англи халăхĕн никам хавшатаймi хăюллăхĕ фашистсене арпа-кĕрпе пек аркатса тăкасса кĕтсе, эпир алăсене усса ларма пултараймастпăр. Варшавăн ишĕлчĕк куписем, пуçса лапчăтнă, юхăнтарса хăварнă тата мăшкăлласа кӳрентернĕ Польша çĕрĕ пире кĕрешĕве чĕнеççĕ. Оккупантсен террорĕнче кашни кун вилнĕ тата вилсе пыракан çынсен асаплă кăшкăрăвĕсем пире кĕрешĕве чĕнеççĕ. Пирĕн халăхăн аслă традицийĕсем пире кĕрешĕве чĕнеççĕ.

Совет Союзĕн çĕрĕсем çинче Польша çарĕ йĕркеленет, çав çар Хĕрлĕ Çарпа çумма-çумăн тăрса, пирĕн çĕршывăн тăшманне—славянствăн тăшманне, этемлĕхĕн тăшманне хирĕç кĕрешĕве тухать.

Немĕçсем туртса илнĕ çĕрсенче поляксем противник тылĕнче кĕрешĕве çĕкленсе тăраççĕ. Çак кĕрешĕве çĕр хут ытларах вăйлатас пулать. Силезири шахтерсем, чăшкусене чăмăртăр! Варшавăри металлистсем, сирĕн вырăн—кĕрешекенсен ретĕнче! Лодзьри текстильщиксем, Краковри строительнăй рабочисем—кĕрешĕве! Хресченсем! Тăшман çине!

Кĕрешĕве! Кĕперсене взрыв туса аркатăр, транспортсене çĕмĕрсе тăкăр, складсене вут тĕртсе çунтарăр, чугунçул, телеграф тата телефон линийĕсене пĕтерсе тăкăр! Кашни вăрман—хĕçпăшаллă лагерь, кашни ял—засада, кашни çурт—крепость пулса тăтăр.

Поляксем! Тĕнчене Коперник, Мицкевич, Шопен, Костюшко, Ярослав, Добровский, Людвиг Варынский пекех халăх нихăçан та чура пулмасть! Тăшмана Польша çĕрĕ çинчен хăваласа ярар!

Алла хĕçпăшалсем илер! Çĕнтерӳ тумалли кун çывхарса килет!

Белорусс халăхĕн ячĕпе Белорусси халăх поэчĕ Янка Купала саламлă сăмах тухса калать, вăл хăйĕн хĕрӳллĕ сăмахĕнче пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешме чĕнет.

— Славянсен ытти çĕршывĕсем пекех,—тет вăл,—манăн тăван Белоруссин пĕр пайĕ çине варвар-фашистсем тискеррĕн тапăнса кĕчĕç. Мирлĕ хуласем çине бомбăсем пăрахни, стариксене, пĕчĕк ачасемпе хĕрарăмсене тискеррĕн хĕнесе асаплантарни, саласемпе ялсене вут тĕртсе çунтарасси—манăн халăх çаксене пурне те тӳссе курчĕ. Анчах сĕмсĕр захватчиксене хирĕç геройла кĕрешес ирĕк-кăмăла унăнне нимĕнле тискер ĕçсем те путарса лартаймарĕç. Белорусс халăхĕ Совет Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле Хĕрлĕ Çар ретĕнче çапăçать çеç те мар, тата вăл тăшмана хирĕç унăн тылĕнче хаярăн кĕрешет. Тăшман валли пĕр тĕпренчĕк çăкăр, пĕр тумлам шыв хăвармасăр, юхăнтарнă ялсенчи хресченсем вăрмансене каяççĕ, тăшман çине хăюллăн тапăнаççĕ, вĕсенчен хĕçпăшалсем туртса илеççĕ, вĕсен чĕрĕ вăйне пĕтере-пĕтере тăкаçĕ, вĕсен танкĕсене çĕмĕреççĕ, коммуникацийĕсене аркатаççĕ, вĕсене çĕрле те, кăнтăрла та канăçлăх памаççĕ.

Поляксем, чехсем, сербсем пĕр аслă семьене пĕрлешсе, пирĕн пĕтĕмĕшлĕ тăшмана—гитлеровщинăна хирĕç кĕрешме кашни кун ытларах та ытларах хаярăн çĕкленсе тăни çинчен илтсен, пирĕн белорус чĕри пысăк хаваслăхпа тулса тапма пуçлать, çав халăхсен аслă çемьинче нихăшĕ те малти вырăна йышăнса пуçпулса тăрассишĕн хăпăнмаççĕ.

Хĕрлĕ Çар фашизма кашни сехетрех хăватлăрахран та хăватлăрахран пырапыра çапать. Тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре эпир те вĕçне çитиех хăюлă, иксĕлми паттăр пулар.

Словаксен обществăллă деятелĕ Чехословаки парламенчĕн депутачĕ **Марек Чулен** çапла калать:

— Словак Иудисем — Тука, Мах тата Тисо словак çамрăкĕсемпе арçынĕсене тăвансене вĕлермелли вăрçа хăваласа яраççĕ, вĕсене Гитлершăн — пире хамăран асаттесем ĕçленĕ çĕр çинчен хăваласа яма, çак çĕр çине немĕç колонисчĕсене вырнаçтарма тăрăшакан бандитшăн хăйсен юнне юхтарма хушаççĕ.

Словаксемпе словачкăсем, çынвĕлеренĕн аллине тытса чарăр! Продовольствине пытарăр, немĕç фашизмне усă кӳме пултаракан япаласемпе пурлăхсене пурне те пĕтерсе тăкăр. Пăшалсем, пуртăсем, кирек мĕнле хĕçпăшалсем тытăр та— сăртсем çине, вăрмансене кайăр, боевой дружинăсем организацилĕр. Сире куççулĕ пулăшаймĕ, кĕрешӳпе отпор çеç пулăшĕç.

Фронтра кĕрешекен словак салтакĕсем, эпир вырăссене хирĕç ан çапăçăр, хăварăн хĕçпăшалăрсене немĕç йыттисене хирĕç çавăрса тăратăр, арăмусемпе ачусемшĕн—немĕçсем пирĕн халăха кăтартнă мĕнпур хĕнхурсемшĕн тавăрăр. Асра тытăр, чура пулниччен вилни лайăхрах. Асра тытăр, пулас пурнăç хăюлла та паттăр çынсен аллинче çеç пулмалла!

Унтан, Карпат леш ъенчи Украинăн обществăллă деятелĕ Чехословаки парламенчĕн депутачĕ **Иван Локота** сăмах тухса калать. Вăл хăйĕн халăхне фашистсене хирĕç — Украина культурине, Украинăн нацийĕ прависемпе йăлисене пĕтерекенсене хирĕç хăюллăн кĕрешме чĕнет.

— Чехословакине аркатса тăкнă хыççăн, немĕç фашизмĕ Карпат леш ъенчи пирĕн Украинăна Венгрие пачĕ. Венгри фашисчĕсем Украина шкулĕсене хупрĕç. Пирĕн студентсемпе учительсене тĕрмесемпе концентрацийлĕ лагерьсене ячĕç. Вĕсем Украина халăхне пĕтерме тăрăшаççĕ. Вĕсем Трибушаны ялĕнче 6 çынна тытса, вĕсене вăрмана илсе кайса асаплантарнă: вĕсен сăмсисене, хăлхисене касса илнĕ, куçĕсене тĕксе шăтарнă, унтан вара вĕлернĕ. Фашизм пĕтĕм Украина халăхне чурасем туса хума хăтланать.

Манăн хаклă шăллăмсемпе йăмăкăмсем! Хамăран ирĕклĕхшĕн татăклă кĕрешĕве тухмалли вăхăт çитрĕ. Партизанла отрядсем организацилĕр, алла хĕçпăшал илĕр, фашистла бандăсем çине тапăнăр, чугунçулсемпе шоссе çулĕсене, вооружени тата продуктсем тиенĕ транспортсене пĕтерсе тăкăр. Фабрикăсенче, шахтăсенче саботаж тăвăр. Фашистсен фронтне пулăшма пултаракан мĕнпур пурлăхсемпе япаласене йăлтах пĕтере-пĕтере тăкăр.

Немĕç поэчĕ **Иоганнес Р. Бехер** сăмах илет.

— Эпĕ, немĕç писательĕ,—тет вăл,— ирĕклĕхе юратакан славян халăхĕсен çак митингне пĕтĕм чĕререн саламлатăп. Кунта тухса каласа çакăн çинчен шантарасси манăн тивĕçлĕх тесе шутлатăп:

Германин хальхи преступленийлĕ правительстви ĕнтĕ темиçе çул хушши пропагандăлакан расăллă пӳтсĕр теори немĕç халăхĕн чи лайăх элеменчĕсен чăн-чăн туйăмĕсемпе тата шухăшĕсемпе нихăш енчен те сыхăнса тăмасть. Ытти халăхсем çинче хăй варварла пуçпулса тăрас тесе, фашистла клика чи малтанах немĕç халăхне чуралантарчĕ. Немĕç халăхĕ ирĕклĕ пулнă пулсан, вăл çакнашкал юнлă та шанчăксăр ĕçре хăйĕнпе усă курма нихăçан та ирĕк паман пулĕччĕ.

Çак мĕнпур тискер преступленисем пулнине, çак ирсĕр те намăссăр суя немĕç чĕлхипе сарăлнине, халиччен этемлĕх историйĕнче пулса иртнĕ мĕнпур тискер ĕçсенчен темиçе хут тискертерех ĕçсем Германи ячĕпе пулнине мĕнпур тӳрĕ кăмăллă немĕçсем хăйсен чĕрисене ыраттарса туйса тăраççĕ.

Ытти мĕнпур расăсем «тулли хаклă мар» текен ăссăр шухăшсене сарса, фашизм хăйĕн преступленине, хăй тулли хаклă маррине пытарма тăрăшать, фашизм немĕç халăхне те «хăйĕн раси» çумне хутшăнтармасть, суйласа илнĕ çынсене çеç, урăхла каласан, фашистсене хăйсене çеç «аслă раса» тесе калаççĕ, вĕсене гитлерла заправилăсем «пурнăç талккишĕсене çĕнсе илме» вăрça яраççĕ.

Славян халăхĕсем этемлĕхе паннă аслăран та аслă культурăллă халăхсене —Чайковскин, Пушкинăн, Гоголĕн, Толстойăн, Максим Горькин, Мицкевичăн вилĕмсĕр произведенийĕсене, Болгари, Югослави, чех искусствипе литературин чи лайăх творенийĕсене Германи халăхĕн чи лайăх представителĕсем яланах пысăккăн хаклană.

Тӳрĕ кăмăллă мĕнпур немĕçсен чĕрисенче немĕнле расăллă курайманлăх та çук. Çав расăллă курайманлăх пропаганда министерствин çурчĕсемпе пивнойсенче çеç алхасать, унта вилĕм эмблемине çакса çӳрекенсем эрех кĕленчи умĕнче хăйсен тусĕсемпе тĕл пулаççĕ. Хăйне хăй «высший» расăн образецĕ тесе мухтанакан чăлах карлик Геббельс, Гитлер таврашĕнчи тарçăсем, фашистсен мĕнпур палачĕсем, садистсем, ăсĕр пуçсем кирек мĕнле тăрăшсан та вĕсем тата вĕсен «расăллă теорийĕ», вĕсен ытти мĕнпур суйăпе пĕрле, арпа-кĕрпе пек саланса кайĕç, немĕç халăхĕ вара çĕнĕрен тулли кăкăрпа сывлама пуçлĕ, фашистла çĕрĕк шăршăран тасалнă сывлăшпа сывлама пуçлĕ.

Славян халăхĕсем хăйсен таса правине çеç — ытти халăхсем хушшинче ирĕклĕн пурăнас правăна çеç ыйтаççĕ. Немĕç халăхĕн чи лайăх çыннисем çак требовани майлă тăраççĕ. Вĕсем çапла шутлаççĕ: ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсемпе мирлĕн тата пĕр шухăшлă пулса пурăнсан çеç немĕç халăхĕн пурнăç интересĕсем пурнăçа кĕме тата сыхланса юлма пултараççĕ.

Немĕç поэчĕ хыççăн унăн тăван çĕршывĕнчи драматург **Фридрих Вольф** сăмах тухса калать.

— Малтанах,—тет вăл,—Гитлер вак халăхсем çине тапăнчĕ, вĕсенчен никама пăхăнмасăр пурăнмалли положенине, вĕсен нацийĕ пурнăçне туртса илеспĕн пулчĕ. Эпир, немĕç антифашисчĕсем, Гитлер вăйлăн та татăклăн хирĕç тăракан противникпа тĕл пулсанах—унăн пĕтĕм системи ишĕлсе анасса пĕлсе тăнă.

Çавăн пек пулмалли сехет персе çитрĕ! Гитлерла çара Хĕрлĕ Çар чылай вырăнсенче вăйлăн пыра-пыра çапрĕ ĕнтĕ. Юлашки ăрнесем хушшинче пĕтĕм Европа тăрăх гитлерла тиранине хирĕç тăрас хум, ирĕклĕхе туртăнас хум çĕнĕрен сарăлса кайрĕ. Çак хăватлă движенине ирĕклĕхе юратакан мĕнпур тĕнчери халăхсем хутшăнĕç тата немĕç халăхĕн ирĕклĕхе юратакан элеменчĕсем те çак движенине юлашки чăнлăх мар хутшăнĕç. Манма кирлĕ мар: Германи халăхĕн вуншар чи лайăх представителĕсем Гитлерла режима туса хунă концентрацийлĕ лагерьсемпе тĕрмесенче лараççĕ. Гитлер вăл — немĕç халăхĕ мар! Немĕç халăхĕ фашистла намăслăха çуса тасатас кун кирлĕ çитет!

Хĕрлĕ Çар хăйĕн тăван çĕршывĕнчен кĕрешет, анчах çак кĕрешӳ вăл пусмăрта пурăнакан тата ирĕклĕхе юратакан мĕнпур тĕнчери халăхсен кĕрешĕвĕ пулса тăрать!

Вырăс писательне **Александр Фадеева** сăмах параççĕ. Вăл мĕнпур славян халăхĕсен Мускаври митингĕ ячĕпе пусмăрта пурăнакан мĕнпур тĕнчери славян халăхĕсем патне çырнă возванине вуласа парать. Çак воззванинех Украина писателĕ Александр Корнейчук, Белоруссин халăх поэчĕ Янка Купала, Польша писательниçи Ванда Василевская, Чехословакин обществăллă деятелĕ профессор Зденек Неедлы, сербсен обществăллă деятелĕ Божидар Маслярич, болгарсен обществăллă деятелĕ доктор А. Стоянов, словаксен обществăллă деятелĕ Чехословаки парламенчĕн депутачĕ Марек Чулен, словенсен обществăллă деятелĕ журналист Иван Регент, хорватсен обществăллă деятелĕ Юро Салай хăйсен тăван чĕлхипе вуласа параççĕ.

Воззвание мĕнпур тĕнчери славян халăхĕсен шухăшĕсемпе çутă ĕмĕчĕсене палăртса панă, Германи фашизмне хирĕç пыракан таса вăрçа çĕнтерӳллĕн вĕçлес никам хавшатаймi ирĕккăмăла палăртса панă.

— Юнлă гитлеризма пĕтерсе хуракан пирĕн çĕнтерӳ сывă пултăр!

Воззвании юлашкинчен калана çак сăмахĕсем çапăçу ялавĕ пулса тăраççĕ, çак ялавпа поляксем, чехсем, словаксем, Карпат леш ъенчи украинецсем, сербсем, черногорецсем, словенецсем, хорватсем, болгарсем, македонецсем—нумай миллионлă славян халăхĕсен пĕтĕм тĕнчи çĕкленсе тăрса, хăйсен ылханлă тăшманне—Германи фашизмне хирĕç вилĕмле çапăçăва тухма пĕрлешеççĕ. (ТАСС).

Поляксем, тавăру сехечĕ çывхарса çитет!

Польша генералĕн Мариан Янушайтисăн сăмахĕ

Тăванăмсем—поляксем, тата пурте хамăр тăвансем—славянсем, Германи варварĕ пусмăрта асап кăтартнă халăхсем, сире чĕнсе калатăп.

Польша халăхĕ Германия хаярăн тапăннине хирĕç пин çул кĕрешет. Çакă кĕрешӳре хĕвелтухăçĕнчи йăхсем—оботритсемпе вендăсем пĕтнĕ, мужичансен юлашкийĕсем кăна сыхланса юлнă.

Эпир халĕ славянсен ĕмĕрхи тăшманĕ ытти славянсен халăхĕсем çине хаярăн тапăннин вăхăтне пурăнса иртеретпĕр.

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах Польша, миллионлă çарне çухатса, юн юхтарать, унăн халăхне пусмăра кĕртсе ӳкереççĕ. Польша тăшмана хирĕç тарăнмасăр кĕрешсе шыни тата унăн жертвисем тăшман планне çĕмĕрчĕç. Славянла хĕвелтухăçне тапăнса, вăл хĕвеланăçĕнчи вăрçа сыхланса кайрĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ славянсен чи пысăк пĕрлешӳлĕхне — славянсен советлă пĕрлешӳлĕхне вăл тапăнса кĕресси кая юлса пычĕ. Польшăн çак вăрçăри ролĕпе миссийĕ çакăнта тăрать. Çакăнтах Германи фашизмĕн вилессин пуçламăшĕ. Польша, Чехи, Югослави тата ытти хамăр тăвансен нумай жертвисене парса, Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума эпир кирлĕ вăхăта суйласа илтĕмĕр.

Германия славянсем çине ĕмĕрех тапăнса кĕнине хирĕç пыракан çак историллĕ кĕрешӳре хамăран çарпа пĕтĕм халăхăн асапне тӳссе татăклă çапăçу пуçласа яма пирĕн çине, поляксем çине, шăпа та чыс тухрĕ.

Анчах, хăватлă та хаяр тăшмана çĕнтерес тесен, пĕрлешни кирлĕ. Кĕрешӳ славянсен пурнăçĕшĕн е вилĕмĕшĕн пырать.

Захватчиксене хирĕç пурте пĕрле тăрса кĕрешме славянсем пĕрлешмелле.

Эпир, поляксем, питех те йывăр положенире тăратпăр.

Çак вăрçă пирĕнпе Совет Союзĕ хушшинче ĕлĕкхи кӳршĕллĕ тавлашусем пынă вăхăтра пуçланса кайрĕ.

Анчах, çапла пулсан та, Польша правительстви, май килсе тухсанах, хăйĕн кӳршипе Килĕшӳ турĕ.

Сикорский генералăн правительстви, Совет Союзĕпе килĕшӳ туса, политикăллă тарăн ăслă пулнине, Польша халăхне пысăккăн ĕненнине тата халăхи историллĕ процеса ăнланнине кăтартрĕ. Çавăнпа та пĕтĕм Польша халăхĕ Сикорский ĕçне пулăшса пырать.

Поляксем! Пирĕн обязанность—Польшăпа Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшӳве халех пурнăçа кĕртесси пулать. Халĕ иккĕленсе тăма вырăн çук! Халĕ гитлеризма çапса çĕмĕрмелле! Çак Килĕшӳре тата Британи халăхĕ пулăшнинче эпир хамăр çĕнтерессин, ытти тăвансен—славянсен тата таса шухăшлă этемлĕх çĕнтерессин шанчăкĕ пур.

Хĕрлĕ Çар енче Польша та çар тăвать. Унăн кадрĕсем хăвăрт ӳссе пымалла. Славянсен ачисене вĕлерекенсене хирĕç кĕрешме эпир тылра та хатĕрленмелле. Хатĕрленме кирлĕ, анчах ăна ăслăн туса пымалла, мĕншĕн тесен тăшман чее те хаяр. Эпир çăмăл шухăшлă пулмалла мар. Киреклĕ мĕнле ĕç тунă чухне те алăсене усмалла мар. Организаци, дисциплина, вăрçăри пуçарулăх—çаксем вĕсем салтаксен тата поляксен авалхи тивĕçлĕхĕ.

Татăклă çĕнтерӳ сехечĕ çывăх!

Поляксем! Славянсене пин çул хĕссе пынишĕн, хĕвеланăçĕнчи славянсене пĕтернишĕн, ытти славянсен юнĕпе куççулĕн тинĕсшĕн тавăру сехечĕ çитсе пырать.

Эпир хамăр çăлăнассишĕн кăна мар, ытти халăхсене çăлассишĕн те, лайăх пурнăçшăн çапăçăпăр.

Германи фашизмĕ — славянсемпе французсен кăна мар, англичансен тăшманĕ те.

Германи фашизмĕ—çынна çын пусмăрласа тăракан чи ирсĕр тĕнче, чуралăхпа пусмăрлăх тĕнчи тăваканскер.

Германи фашизмне пĕтерни—ирĕксĕрленипе пусмăрлăха пĕтерекен çĕнĕ тĕнчене, çĕнĕ эра патне çывхарни пулса тăрать. Халĕ эпир ачасемпе хĕрарăмсене вĕлерекен Германи фашисчĕсене хирĕç кĕрешнĕ пекех, ситес çĕнĕ эрăра çынна çын пусмăрланине хирĕç кĕрешĕç.

Польша сывă пултăр!

Польшăпа Совет Союзĕ хушшинче тунă Килĕшӳ сывă пултăр та чечекленсе пытăр!

Мĕнпур славянсем сывă пулччăр тата пĕрлешчĕр!

Пирĕн тăшман—Германи фашизмĕ çĕр пичĕ çинчен ĕмĕрлĕхех çухалтăр!

ПУСМĂРТИ ТĂВАН СЛАВЯНСЕМ!

Этемлĕх халиччен пĕлнĕ вăрçăсенчен чи юнлă та арканулла вăрçăра çунать тĕнче.

Тĕнчене çак вăрçă вутне юншăн çăтканакан Германи фашизмĕ тĕртсе кĕртрĕ. Франци, Чехословаки, Польша, Австри, Голланди, Бельги, Дани, Норвеги, Югослави, тата Греци халăхĕсем—Германи фашисчĕсемпе вĕсен тарçисен Итали, Венгри, Румыни тата Финлянди фашисчĕсен пусмăрĕнче.

Гитлеризм уйрăмах славян халăхĕсене кураймасть. Германи фашизмĕн ирсĕр планĕ—пирĕн авалхи славян çĕрĕсене яланлăхах хăйсен аллине тытса илесси, çав çĕрсене немĕç баронĕсемпе помещикĕсене, Италипе Венгри улпучĕсене валеçсе парасси, славян халăхĕсенчен ĕмĕрлĕхех чура туса хурасси.

Германи фашизмĕ славянсене пуçĕпех вĕлерсе тĕп туса хурасси умĕнче те чăранса тăмасть. Гитлер тата унăн фашистла йыткĕтĕвĕ «славян массисене пĕтересси» çинчен тӳрех каласçĕ. Славянсене пĕтерес çав юнлă плана фашистсем тĕнче курман хаярлăхпа пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Европăри чи культурăллă та ăсчах халăхлă çĕршывсенчен пĕрине—Чехословакине Германи фашизмĕ чуралантарса, татăк-кĕсĕкĕн вакларĕ. Словаки çĕрĕсен чылай пайне Венгри помещикĕсене парнелесе панă. Карпат леш ъенчи Украинăна та çавăн пек раскалах пырса тиврĕ. Чехсемпе словахсенчен, Карпат украинецĕсенчен 100 пин çын ытла тĕрмесенче тата концентрацийлĕ лагерьсенче асапланаççĕ.

Германи фашизмĕ Польша республикине аркатса пĕр çул çурă хушшинче 3 миллион поляка яхăн вĕлерсе пĕтерчĕ. Австрин Граце тата Вольфсберг хулисенче Гитлер «чурасен базарĕ» туса хучĕ, унта Польша хресченĕсемпе рабочийĕсене немĕç помещикĕсен тата предпринимателĕсен аллине торги туса сутаççĕ.

Гитлерăн йыткĕтĕвĕсем, хăйсем хыççăн Итали, Венгри фашисчĕсене ертсе пырса, Югославине тискер-кайăкла тулласа тăкрĕç. Белград хулине аркатнă. Хулара малтанхи кунсенчех мирлĕ халăхран 32 пин çынна тискеркайăкла вĕлернĕ. Германи, Итали, тата Венгри фашисчĕсем Югослави государствине хăйсем хушшинче разбойникла валеçнĕ. Вĕçĕ уйăх хушшинче 80 пин серб çыннине вĕлерсе пĕтерчĕ.

Болгарире, изменниксен ертсе пыракан ушкăнĕ сутса Гитлер аллине паннă çĕршывра, Германи оккупанчĕсем хуçа пулса тăраççĕ. Болгари халăхне хăйĕн тăванĕсем пулса тăракан славянсене хирĕç ирĕксĕрлесе вăрçа чикеççĕ. Болгари халăхне питех те тискеррĕн террорлаççĕ, çаратаççĕ.

Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла ултавлăн тапăнса кĕрсе, Германи фашизмĕ Хĕрлĕ Çар паракан тимĕр пек çирĕп отпор çине тата мĕнпур вырăс, Украина, Белорусси халăхĕсем, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем фашизма хирĕç çĕкленнĕ аслă хăват çине пырса тăрăнчĕ. Советлă Украинăпа Белоруссин тăшман тытса илме ĕлкĕрнĕ районĕсенче фашистсем мирлĕ халăхран тĕнче курман тискерлĕхпе мăшкăлласçĕ, ялă-ялĕпе çунтарса яраççĕ, кресченсене линшерĕн асаплантараççĕ, хĕрарăмсене пусмăрлаççĕ, ачасене вĕлереççĕ. Пĕр Львов хулинче кăна немĕçсем хуçа пулса асна малтанхи кунсенчех 6 пин çынран кая мар перçе, асаплантарса вĕлернĕ.

Çапла ĕнтĕ ирĕклĕхе юратакан мĕнпур славян халăхĕсене: Карпат украинецĕсене, поляксене, сербсене, хорватсене, словенецсене, болгарсене, вырăссене, украинецсене, белоруссене Германи фашизмĕн юнлă агрессийĕ пырса тиврĕ.

Пусмăрти тăван славянсем! Эпир вилĕмлĕ хăрушлăх умĕнче тăратпăр.

Вăхăт çитрĕ, Германи фашизмне хăвăртрах тата пуçĕпех çапса аркатассишĕн мĕнпур славян халăхĕсен тĕнчин пĕрлешме вăхăт çитрĕ.

Эпир пĕр танлисем пĕр танлисемпе пĕрлешнĕ пек пĕрлешетпĕр. Пирĕн пĕр задача, пĕр тĕллев — гитлерла сарсене çапса аркатасси, гитлеризма пĕтересси.

Пирĕн пĕр хĕрӳллĕ те пурне те пĕтĕçтерекен аслă ĕмĕт—славян халăхĕсем, ытти мĕнпур халăхсем пекех, хăйсен государственноçĕн талккишĕнче мирлĕн те ирĕклĕн аталанса пычăр. Вырăс царизмĕ хăйĕн империалистла тĕллевĕсем енĕпе усă курнă панславизм теорине, халăхсен пĕртанлăхĕн тата мĕнпур государствăсен нацийĕ аталанăвĕн аслă задачисемшĕн пĕтĕмпех тăшманла, витĕрех реакцийлĕ юхăм вырăнне хурса, эпир татăклăн та çирĕппĕн сиреттĕр. Пирĕн задача — темĕн пек пысăк жертвăсем тӳсмелле пулсан та, пĕрлешӳллĕ вăйсемпе немĕçсен фашистла пусмăрне пĕтересси.

Пусмăрти тăван славянсем! Гитлеризм пусмăрланă тата пусмăрласа пыракан мĕнпур славян çĕрĕсенче тĕрĕслĕхлĕ таса кĕрешĕвĕн çулăмăл шухăшлă пулмалла мар. Киреклĕмĕнле ĕç тунă чухне те алăсене усмалла мар. Организаци, дисциплина, вăрçăри пуçарулăх—çаксем вĕсем салтаксен тата поляксен авалхи тивĕçлĕхĕ.

Татăклă çĕнтерӳ сехечĕ çывăх!

Поляксем! Славянсене пин çул хĕссе пынишĕн, хĕвеланăçĕнчи славянсене пĕтернишĕн, ытти славянсен юнĕпе куççулĕн тинĕсшĕн тавăру сехечĕ çитсе пырать.

Эпир хамăр çăлăнассишĕн кăна мар, ытти халăхсене çăлассишĕн те, лайăх пурнăçшăн çапăçăпăр.

Германи фашизмĕ — славянсемпе французсен кăна мар, англичансен тăшманĕ те.

Германи фашизмĕ—çынна çын пусмăрласа тăракан чи ирсĕр тĕнче, чуралăхпа пусмăрлăх тĕнчи тăваканскер.

Германи фашизмне пĕтерни—ирĕксĕрленипе пусмăрлăха пĕтерекен çĕнĕ тĕнчене, çĕнĕ эра патне çывхарни пулса тăрать. Халĕ эпир ачасемпе хĕрарăмсене вĕлерекен Германи фашисчĕсене хирĕç кĕрешнĕ пекех, ситес çĕнĕ эрăра çынна çын пусмăрланине хирĕç кĕрешĕç.

Польша сывă пултăр!

Польшăпа Совет Союзĕ хушшинче тунă Килĕшӳ сывă пултăр та чечекленсе пытăр!

Мĕнпур славянсем сывă пулччăр тата пĕрлешчĕр!

Пирĕн тăшман—Германи фашизмĕ çĕр пичĕ çинчен ĕмĕрлĕхех çухалтăр!

Гитлеризма хирĕç ирĕклĕх çăрçине тăрăр!

Славян халăхĕсене вĕлерекенсене, Гитлерпа Муссолинин фашистла бандисене — вилĕм! Юнлă гитлеризма пĕтерсе хуракан çĕнтерӳ сывă пултăр!

Вырăс писателĕ, академик **Алексей Толстой.**
Украина писателĕ, академик **Александр Корнейчук.**
Белоруссин халăх поэчĕ **Янка Купала.**
Польша генералĕ **Мариан Янушайтис.**
Польша писательниçи **Ванда Василевская.**
Чехсен обществăллă деятелĕ, профессор **Зденек Неедлы.**
Словакин обществăллă деятелĕ, Чехословаки парламенчĕн депутачĕ **Марек Чулен.**
Карпат леш ъенчи Украинăн обществăллă деятелĕ.
Чехословаки парламенчĕн депутачĕ **Иван Локота.**
Чехословаки поэчĕ, профессор **Ондра Лысогорский.**
Сербин обществăллă деятелĕ, профессор **Божидар Маслярич.**
Хорватин обществăллă деятелĕ **Юро Салай.**
Словен журналисчĕ тата обществăллă деятелĕ **Иван Регент.**
Черногори поэчĕ **Радуле Стийенский.**
Болгари общественнăй деятелĕ, доктор **Л. Стоянов.**
Македонин обществăллă деятелĕ **Дмитрий Влахов.**

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: совет танкисчĕсем çĕмĕрсе тăкнă фашистсен танкĕ.

Л. Великжанин фото-укерчĕкĕ. (ТАСС)

Çĕршыв оборонин фончĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Турханти «Октябрь» колхоз членĕсем çĕршыв оборонин фондне тăвас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Комсомолец А. Богданов 15 ĕçкунне тивекен тупăша, кашни бригадир 10 ĕçкунĕ тупăшне оборона фондне параççĕ.

Учительсем тата ытти служащисем кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине çĕршыв оборони фондне пама пулчĕç. Кунсăр пуçне учительсем: Игнатьевпа Захаров юлташсем 490 тенкĕлĕх заем облигацисене панă. Коммунист Щеглов юлташ 2 кунхи ĕç укçине тата 200 тенкĕлĕх заем облигаци панă. Çапла вара Турхан ялĕнчи ĕççыннисем тăван çĕршыв оборони фондне 4330 тенкĕ укçан панă тата 145 ĕçкунĕн тупăшне параççĕ.

А. КОСОЙКИН.

* * *

ВĂРНАР. Районри предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче çĕршыв оборонин фондне тăвас ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Ку ыйтăва митингсенче сӳтсе-явса, ĕççыннисем хăйсен перекетленсе пынă укçи-тенкисене хаваслансах оборона фондне параççĕ.

Лесхомхозри тата чугунçул станцинчи рабочисемпе служащисем вăрçă пĕтичченех кашни уйăхри иккĕр кунхи ĕçукçине пама пулчĕç.

Пăртасри «Рапорт» колхозри колхозниксем хăйсен пуçарăвĕпе районра чи малтан оборона фончĕ валли укçа пама тытăннă. Колхозниксем пĕтĕмпе оборона фондне 3547 тенкĕ хывнă. Укçа-тенкĕ панипе пĕрлех, вĕсем хăйсем тăван çĕршыва сыхлама тăма хатĕр. Кунта вăрçă ĕçне вĕренсе пыраççĕ, юлашки вăхăтра ку уйрăмах палăрать. Вăрçă ĕçне 570 çын вĕренеççĕ. Ку ĕçе пуçламăш парторганизаци лайăх ертсе пырать.

Районри ытти предприятисемпе учрежденисенче, колхозсенче пуринче те тенĕ пекех оборона фондне пĕр кунхи ĕçукçине пама йышăннă.

Е. ВОЛКОВ.

* * *

ИЕПРЕÇ. «Красный фронтовик» колхоз членĕсем оборона фондне 200 пăт тырă пама йышăннă. Кунсăр пуçне колхозниксем хăйсен уйăхри ĕçкунĕнчен кашни уйăхрах пĕр ĕçкунне оборона фондне парса тăма пулчĕç.

Учительница Елена Пудовкина пĕр эрнери ĕçукçине тата 400 тенкĕлĕх заем облигацисене оборона фондне панă.

«Тымар» колхоз членĕсем те оборона фондне тума пысăккăн пулăшаççĕ. Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче оборона фончĕ валли колхоз ферминчен 500 литр сĕт пама йышăннă. Колхозниксем 690 тенкĕлĕх заем облигацисене хывнă. Вĕсенчен красноармеецсен арăмĕсем Евдокия Филиппова — 50, Варвара Петрова — 75, Клавдия Федорова — 70 тенкĕлĕх хыврĕç.

Госбанкра ĕçлекенсем оборона фондне кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине хываççĕ. Заем укçине срокчен 5 уйăх хушшинче тӳлесе татма йышăннă.

Д. М.

Оборона фондне 292.800 тенкĕ укçа хывнă

ССР Союзĕнчи ĕççыннисен çулпуçĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çара пулăшма, тăшмана çĕмĕрсе тăкма мĕнпур вăйсене памашкăн чĕнсе каланине пирĕн республикăри потребкооперати членĕсем пысăк хаваслăхпа йышăнса илчĕç. Тăван çĕршыва чĕререн юратса тăракан рабочисемпе колхозниксем тата интеллигентсем хăйсен средствисене çĕршыв оборонин фондне параççĕ Ку вăхăтчен, республикăри 19 районран пĕлтернĕ тăрăх, потребкооперати членĕсем 1940 çулти тупăшран çĕршыв оборони фондне 292.800 тенкĕ укçа хывнă. Вăл шутран: Çĕрпӳ районĕ — 41 пин тенкĕ, Куславкка районĕ — 34 пин тенкĕ, Вăрнар районĕ — 28 пин тенкĕ, Иĕпреç районĕ—31 пин тенкĕ паçă.

Сăлтăсенче çĕршыв оборонин фондне укçа-тенкĕ хывасси сарăлсах пырать.

А. ГРИГОРЬЕВ.

Çĕршыв обороните тĕреклетме пулăшаççĕ

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ чĕнсе каланине Хусан чугунçулĕн Канаш станцинчи рабочисемпе служащисем большевикла ĕçсемпе ответлеççĕ. Кашни рабочи тата служащи хăйсен выраннĕнче тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе фронта пулăшать. Коллектив вагонсем çине таварсем тиемелли тата пушатмалли июль уйăхĕнчи заданине тултарнă. Çавăн пекех, поездсене график тăрăх илсе çӳрессине те пурнăçа кĕртнĕ.

Товарнăй дворти грузчиксен бригади куллеңхи нормăна 200—250 процент таран тултарса пырать.

Августăн 2-мĕшĕнче тăван çĕршыв оборонин фондне тăвас ыйтупа пур цехсенче те митингсем пулса иртрĕç. Çак митингсенче рабочисемпе служащисен коллективĕ çĕршыв обороните кашни уйăхран пĕр кунхи ĕç укçине пама çирĕплетсе тăма йышăннă.

С. КУДРЯВЦЕВ.

Производствăра фронтри пек кĕрешмелле

Çĕмĕрлери древкомбинатри хăшпĕр квалификацилле рабочисем фронта карĕç пулни те, пĕр цехра та ĕç вăйсăрланни палăрмасть. Йăлтах урăхла, ĕç татах та ытларах вăйланса пырать. Фронта кайнисем вырăнне совет патриотăсем йышăнаççĕ. Пур цехсенче те ĕç йĕркеллĕ пулса пырать, кашни рабочи тата работница хăйĕн юратнă тăван çĕршывĕ умĕнчи обязанноçне чыслăн пурнăçлама тăрăшать.

Цехăн сборочнăй отделенинче стахановец, комсомолец Мостайкин юлташ ĕçлет. Отечественнăй вăрçă купĕсенче вăл кулленхи нормăна 2—3 хут иртерсе тултарать. Çамрăк патриот Хĕрлĕ Çар ретне тăма та хатĕрленсе çитнĕ. Вăл халĕ автомобиль рульне тытса пыма вĕренет. Мостайкин юлташ çар комиссариатĕнчен повестка илнĕ.

— Тăшмана çĕр çинче те, сывлăшра та çапса аркатмалла,—çакă манăн ĕмĕт, — тет вăл.

Унпа юнашар ĕçлекен призывник комсомолец Васильев юлташ: манăн танкист пулас килет, эпĕ танкист пулатăпах, тесе калать.

Çак цехри Марков, коммунист Грачев мастерсен сменисенчи рабочисем пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлеççĕ. Рабочисем Советов, Карпов, Краснояров, Самоплов юлташсем хăйсен нормисене яланах 3—4 хут иртерсе тултараççĕ. Сменăра нормăна тултарман пĕр рабочи те çук. Çапла, июлĕн 26-мĕшĕнче Грачев юлташ сменинчи рабочисем Курманин, Макаров тата ытти юлташсем икшер норма, ытти рабочисем хăйсен нормисене 150-шар процент тултарнă. Ларионов юлташ сменинче июль уйăхĕнче Сенин, Краснояров, Гаврилов, Карпов юлташсем хăйсен нормисене 200 — 300 процент таран тултарса пычĕç. Комсомолец Зотов юлташ июль уйăхĕнче пĕрре те 350 процентран кая тултарни пулман.

Леонтьев тата Бойков мастерсен сменисем те хăйсене панă заданисене ăнăçлăн тултараççĕ.

Виççĕмĕш номерлĕ цехра паллă стахановец, коммунист Фионов юлташ ĕçлет. Вăл белофинсене хирĕç пынă вăрçăра пулнă. Халăхсен юратнă çулпуçĕ Сталин юлташ чĕннине ответлесе, вăл ĕç тухăçлăхне 2—3 хут ӳстерме пулчĕ. Вăл хăйĕн обязательствине чыслăн пурнăçлать, нормăна 3—4 хут иртерсе тултарать. Унăн профессине хăйĕн арăмĕ — Фионова юлташ вĕренет.

— Фашистла бандăсем пирĕн тăван çĕршыв çине ултавлăн тапăнса кĕни çинчен пĕлсенех упăшка профессине вĕренесси çинчен шухăшларăм. Халĕ эпĕ производствăра, упăшка специальноçне вĕренсе çитетĕп,—тет вăл. Ку тĕрĕс. Фионова юлташ нормăна 200 процент тултарать. Кочетков, Тимофеев тата Коршанов юлташсем те çакăн пекех тухăçлăн ĕçлеççĕ.

Çак цехри иккĕмĕш смена та кашни кунхи заданине ытлашшипех тултарса пырать. Коммунист Подлетков, унăн помощникĕ Волков, мастер Генеральник, унăн помощникĕ Гослик юлташсем ертсе пыракан сменăсем те примерлă ĕçлеççĕ. Призывник Котов юлташ хăйĕн станокĕ çинче куллеңхи нормăна 2—3,5 хут тултарать. Нумай пулмасть ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă çамрăк рабочи Жирнов юлташ та пит лайăх ĕçлет.

Типĕтекен цехри 16 бригадири укладчиксемпе грузчиксем июль уйăхĕнче пурте плана ирттерсе тултарчĕç. Утехина юлташ ертсе пыракан çамрăк бригада уйăхри плана 200 процент ытла тултарнă.

Комбинатри рабочисем тăван çĕршывăн оборона хăватне çирĕплетессишĕн кĕрешнине комбинат июль уйăхĕнчи плана ытлашшипех тултарни те лайăх çирĕплетсе парать.

Пуçламăш парторганизаци рабочисемпе служащисем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе куллен туса пырать. Партбюро уйăрса çирĕплетнĕ 53 агитатор цехсенче, сменăсенче рабочисене отечественнăй вăрçă çинчен, хĕрлĕ воинсен геройла ĕçĕсем çинчен, тăван çĕршывăн обороните çирĕплетесси çинчен каласа параççĕ, рабочисене производствăра стахановла ĕçлеме мобилизацилеççĕ.

П. ГОЛУБЕВ.
Çĕмĕрле комбинатĕнчи партбюро секретарĕн заместителĕ.

„Заготзерно“ пунктĕнче

«Заготзернон» Шупашкарти пункчĕ патне кашни кунах тырă тиенĕ 150—200 лав пыра-пыра чарăнаççĕ. Вĕсем пурте Шупашкар таврашĕнчи районсенчи колхозниксем. Вĕсем пурте хăвăртрах государствăна тырă парса татма васкаççĕ. Вăрçă вăхăчĕ ĕçлеме васкатать. Кашни колхозник, кашни колхозница çакна лайăх пĕлсе тăрать. Кашни килограмм тырă тăшмана çĕнтерме пулăшать.

Шупашкар, Ишлей районĕсенчи нумайĕш колхозсем, Сĕнтĕр районĕнчи 89 колхоз 1941 çулăн государствăна тырă парса татнă. Ытти колхозсем те çитес ӳнере тырă парса татма тăрăшаççĕ. Сĕнтĕр районĕнчи «Малалла» колхоз 60 центнер, Шупашкар районĕнчи «Первое Мая» колхоз 50 центнер çитес çулăн тырă парса татнă. Çакăн пек тĕслĕхсем татах та нумай.

«Заготзерно» пункчĕ тырă йышăнас ĕçе аван организацилеленĕ. Виçнĕ çĕрте колхозниксене тытса тăмаççĕ. Квитанцисене хăвăрт сырса параççĕ. Ку вăл колхозниксене питĕ савăнтарать.

Анчах столовăйсен тресчĕ государствăна тырă пама килекен колхозниксене апат çитерес ĕçе халичченех те организацилемен. Столовăй ӳсма выраң хатĕр. Колхозниксем çĕнĕ тырă пама хатĕрлеççĕ. Малашне заготпунктра кашни кун сахалтан та 200—250 çын пулĕç. Вĕсене апат хатĕрлесе памалла пулать. «Заготзерно» пунктĕнче хĕрлĕ кĕтес пур, анчах та вăл пушă, унта кирлĕ кĕнекесем, журналсем, хăçатсем çук.

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

Заем укçине 5 уйăх хушшинче тӳлесе татаççĕ

ÇЕМĔРЛЕ. Хутарти вăтам шкулта вĕрентекен учительсем тăван çĕршыв оборонин фондне укçа-тенкĕ тата заем облигацийĕсене хываççĕ. Шкул директорĕ А. Петров юлташ оборона фондне тума 200 тенкĕ укçан, 500 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хыврĕ. А. Благоразумова учительница 700 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем тата пĕр пин тенкĕлĕх хаклă япаласем панă.

Çакăнпа пĕрлех, шкулти учительсем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заем укçине 5 уйăх хушшинче тӳлесе татма йышăннă.

С. БАТЬКОВ.



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Гитлерăн юнлă йыттисем хăйсен ялавĕсем çине вилĕм палли — шуç шăмми тата шăмă сыпăкĕсем ӳкерсе хунă. Пирĕн таса совет çĕрĕ çинче вĕсем хăйсен вилĕмне тупаççĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: фашистсен «СС» отрячĕн командирĕ, тарнă вăхăтра ăна красноармеецсен пульли вĕлернĕ. (ТАСС).

Шкул ачисен мухтавлă ĕçĕ

Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ тăшмана çĕмĕрсе тăкас ĕçе халăхăн пĕтĕм вăйĕсене хума чĕнсе каланине ответлесе, совет çĕршывĕнчи пĕтĕм ĕççыннисем тăван çĕршыва сыхлама çĕкленчĕç. Пирĕн тыл çавтери çирĕп, вăл вăрă-хурахла килсе тапăннă фашистла варварсен йыткĕтĕвĕсене çапса аркатма Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парать.

Красноармейскри вăтам шкулти учительсем çар ĕçне çине тăрсах вĕренеççĕ. М. Орлова, А. Ефимова, Е. Степанова, А. Ельмахова юлташсем ГСО иккĕмĕш сыпăк нормине пачĕç, халĕ вĕсем больницăна практикăна çӳреççĕ.

Акитколлектив хăйĕн ĕçне пĕтĕмпех вăрçă вăхăтĕнчи пек улăштарса çĕнетнĕ. Агитаторсем кулленех колхозсенче пулаççĕ, унта докладсемпе калаçусем ирттереççĕ. Агитколлектив хăйĕн ĕçне хуçалăх ыйтăвĕсемпе тĕрĕс çыхăнтарса пынипе колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Сталин, Калинин ячĕпе тăракан колхозсем государствăна çăм, аш-хакай, сĕт-çу парса татнă.

Ялхуçалăх ĕçне шкул ачисем те активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ ашшĕсемпе пиччĕшĕсем вырăнне ĕçлеме тăраççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозри А. Степанов халĕ звеновод пулса ĕçлет, «Победа» колхозри Тихоновпа Андреев тата Народов пионерсем конюхра ĕçлеççĕ. Красноармейск ялсоветĕнчи кашни колхозра шкул ачисенчен уйрăм бригадăсем тунă, вĕсене учительсем ертсе пыраççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозри А. Степанов, И. Ефимов, А. Николаев, Г. Тихонов, Г. Васильев пионерсем 75-шер ĕçкунĕ тунă. Сергеева, Дмитриев, Иванов пионерсем кĕлте сыхнă çĕрте нормăна 150 процент таран тултарса пыраççĕ. Петровпа Никитин пионерсем куллен 60—70-шер тĕм тăваççĕ. Çав вăхăтрах, учительсемпе шкулта вĕренекен ачасем шкул çуртне юсанă çĕре те хутшăнса ĕçлеççĕ. Учительсен вăйĕпе партăсене юсанă, класри доскасене сăрланă, кăмакасене юсанă. Укçа çине хурса, шутласан, учительсем шкул çуртне юсанă çĕрте 4 пин тенкĕлĕх ĕçленĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валли 2 пин тенкĕлĕх вĕренӳ пособийĕсем, библиотека валли 1.412 тенкĕлĕх кĕнекесем илнĕ.

Учительсем хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстерес пирки те çине тăрса вĕренеççĕ. Кăçал виçĕ учитель аслă шкулсенчен заочнă вĕренсе тухрĕç.

С. ФИЛИМОНОВ.

Виççĕмĕш кварталти финанс планне срокчен тултарассишĕн

Аслă Сталин чĕннипе пĕтĕм совет халăхĕ тăван çĕршыва хӳтлеме çĕкленчĕ. Иккĕр миллионлă совет халăхĕ тăшмана аркатмаллипех çĕмĕрекен Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн вăйхăватне пур майсемпе те тĕреклетме тăрăшать.

Хăрушă вăхăтра советăн кашни патриочĕ хăйĕн умĕнче мĕнле ответлăх тăнине лайăх туйса ĕлчет.

Кашнин хăйĕн выраннĕнче тӳрĕ кăмăлпа, çине тăрса ĕçлемелле, совет законĕсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла, революциллĕ сыхăлăха ӳстермелле, пирĕн тăван çĕршывăн тăшманĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пымалла, тесе Сталин юлташ кăтартса панине пĕр пăркаланмасăр ĕçе кĕртсе пырасси — тăван çĕршыври патриотсен хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать.

Совет Союзĕн бюджечĕсем аслă тăван çĕршывăн хăватне кăтартса параççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче, урса кайнă фашизма хирĕç кĕрешнĕ тапхăрта, бюджета тултарса пыни уйрăмах пысăк выраң йышăнса тăрать. Финанс планне тата бюджета йĕркеллĕ, çавнашкалах срокчен тултарни—фашистла çĕлен-калтасене вăйлăн пырса çапни пулать.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем, мĕнпур совет халăхĕ пекех, ĕç фронтĕнче хăйсен пултарулăхĕпе пуçарулăхне кăтартаççĕ.

— Фронта çирĕплетме, фашистла юнлă çĕлен-калтасене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма мĕн кирлине йăлтах тăваттăр,—теççĕ пирĕн республикăри рабочисем, служащисем, колхозниксем тата совет интеллигенцийĕ.

Республикăри чылай районсенчи колхозниксемпе единоличник хуçалăхĕсем ялхуçалăх налогĕн, окладлă страхованин укçисене срокчен тӳлесе татаççĕ.

Пирĕн çĕршыв патриочĕсен ялсенче государство умĕнчи укçа-тенкĕ обязательствисене срокчен тултарас кĕрешӳве ĕççыннисем хушшинче анлăн пуçарса пымалла. Ялсенче совет интеллигенцин, ялсовет, колхоз руководителĕсен, производствăри бригадирсен тата стахановецсен колхозниксемпе единоличниксене кальхи событисем, совет халăхĕ фашистла ирĕвĕрсене хирĕç геройла кĕрешни, çак ĕçре финанс планне тата бюджета срокчен тултарас ĕç пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен тăтăшах та тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Республикăри нумай колхозсенчи колхозниксем заем укçине срокчен парса татрĕç. Малта пыракансен паха примерĕсене республикăри мĕнпур колхозсене куçармалла.

Республикăри чылай районсем пĕрремĕш тата иккĕмĕш кварталсенчи финанс планĕсене срокчен тултарчĕç. Çав районсенчи финанс активĕ, ялсовет исполкомĕсен, колхозсен председателĕсем, ялсовет депутачĕсем, заем уполномоченнийĕсем финанс ĕçне активлăн хутшăнса ĕçлерĕç. Финанс планне срокчен тултарас ĕçре ялсенче массăллă-политикăллă ĕçе пĕлсе йĕркелени пысăк выраң йышăнса тăнă.

Халĕ, вăрçă пынă вăхăтра, финанс планне срокчен тултарас тĕлĕшпе финанс активĕн хăйĕн пултарулăхне татах та ӳстермелле. Финанс работникĕн, активистăн финанс планне срокчен тултарассишĕн кĕрешĕве анлăн сарса пымалла. Укçа-тенкĕ пырса тăрассине вăйлатмалла. Пирĕн республикăри кашни гражданин государство умĕнчи укçа-тенкĕ обязательствисене срокчен тултарма пултартăр, çапла тунипе вăл тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшать.

Районсенчи тата хуласенчи финанс пайĕсен вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлемелле, финанс работникĕсен хăйсене панă ĕçшĕн ответлă пулмалла.

Финанс планне тата бюджета срокчен тултарасси, государствăн укçа-тенкине перекетлĕ тытăкласси — финанс работникĕсемпе финанс активĕн, çавнашкалах парти, совет органĕсен руководителĕсен паянхи задачи пулса тăрать.

Виççĕмĕш кварталти финанс планне те срокчен тултарăпăр. Чăваш республикинчи ĕççыннисем большевиксен партине тата Сталин юлташа чĕререн парăнса ĕçленине тепĕр хут кăтартса парĕç.

В. ТАВРИН.

Пухар тимĕр-тăмăр тата ытларах,
Нумай вăл килте, колхозра, хулара!
Танксем, тупăсем тума кайччăр вĕсем,
Хăвăртрах тăшмана тăкар çĕмĕрсе!

Британи империйĕн вăрçăпа экономика ресурсĕсем

Гитлер ССР Союзне хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе пĕрлăхлă фронт тума хăтланнă. Унăн шутсĕр авантюри арканса кайрĕ: ССР Союзне хирĕç кĕрешмелли пĕрлăхлă фронт вырăнне гитлеризма хирĕç кĕрешме тĕнчери икĕ чи пысăк государствăн — ССР Союзĕпе Великобританин пĕрлăхлă фрончĕ пулса тăчĕ.

Англия Германие хирĕç вăрçма пуçланăранпа часах акă икĕ çулталăк тултарать.

Тĕнчери пĕрремĕш вăрçăри пекех, Англия тĕнчери тинĕс çулĕсене хăй контроллесе тăрать. Çакă вăл уйăн **коммуникацийĕсене** империн пĕтĕм тĕнчипе сапаланса выртакан пайĕсемшĕн лайăх условисем туса парать тата империн пайĕсен ресурсĕсене вăрçă нушисем валли усă курма май парать. Тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнчипе танлаштарсан, империн коммуникацийĕсем халăхи вăхăтра чылаях пысăк харушлăхра, метрополисемпе империн уйрăм пайĕсем хушшинче пĕр-пĕринпе сыхăнса тăма йывăртарах. Апла пулсан та, Англин пĕтĕм грузооборотне илсен, грузсем тĕлĕшпе пулнă çухатусем 5—6 процентран ытла мар.

Фашистла Германире: флота пысăк спен тума пултаракан авиаци ӳснине пула Англин тинĕс-çар флочĕн пĕлтерĕшĕ вăйлăн чакнă, тесе шутланă.

Анчах вăрçă опычĕ çакна кăтартса панă: тинĕс-çар флочĕ Англин хĕçпăшалла вăйĕсен системинче çав-çавах хăватлă фактор пулса тăрать. Фашистла Германи ик çул хушши вăрçă вăхăтра Англин тинĕсри хăватне пĕтерсе тăкма пуллараймал çеç мар, вăрçă Англирен чи вăйлă **сывлăш-çар флочĕ** тума ыйтнă. Ку тĕлĕшпе юлашки уйăхсенче Англия чылай утăмсем тунă. Сывлăш—Çар строительствине метрополире çеç мар, доминионсенче те васкавлăн туса пыраççĕ. Канадăра, Австралире тата Новая Зеландире сывлăшпи вăйсене нумай пухса тăратнă, вĕсен пĕр пайне Англие яраççĕ. Африка йĕри-таврашĕнчи имперски çулсене тата Африкăн хĕвелтухăç пайне йăлтах, Капштадтран пуçласа Каир патне çитиччен, Кăнтăр Африка хăйĕн сывлăшпи вăйĕсемпе сыхласа тăма пулнă. Канадăра, летчиксен кадрĕсене хатĕрлес шутпа, имперски центр организацилеленĕ. Шкулсенчен çулталăкне летчиксемпе вспомогательнăй кадрсене 50.000 çын таран вĕрентсе кăларма шутлаççĕ. Вĕçев ĕçне вĕрентме Канадăна империн пур пайĕсенчи çамрăксене те яраççĕ. Летчиксем вĕрентсе хатĕрлемелли шкулсене Австралире, Новая Зеландире тата Кăнтăр Африкăра та чылай организацилеленĕ.

Хăватлă сывлăш-çар флочĕ тума англичансем Великобританири ресурссене çеç мар, çавăн пекех США-ри ресурссене те явăçтараççĕ.

Империн экономикăллă ресурсĕсене мобилизацилес çĕрте Англи доминионĕсемпе колонийĕсем калама çук пысăк выраң йышăнса тăраççĕ.

Канадăн экономикăллă ресурссем вĕçĕмсĕр нумай (Канадăн территорийĕ 9,5 миллион тăваткăл километр шутланать, унта 1,1 миллион ытла çын пурăнать). 1914—1918 çулсенчи вăрçă вăхăтĕнчипе танлаштарсан, Канадăн промышленность производстви икĕ хут ӳснĕ, электроэнерги туса кăларасси — пиллĕк хут ӳснĕ. Канадăн автопромышленноçĕ питĕ вăйлăн аталаннă, вăл Францинчен пĕртте кая мар. Юлашки уйăхсенче Канада промышленноçне йăлтах вăрçă хатĕрĕсем туса кăларма мобилизациленĕ. Çĕнĕ заводсене вăйлăн тăваççĕ, вĕсенчен пĕр пайне ĕçе янă та ĕнтĕ.

Канада правительстви çакăн пек задача лартнă — 1941 çул варринче хăй çарĕн шутне 500 пин çынна çитермелле

Канадăн тинĕс-çар флочĕ те хăвăрт ӳссе пырать. Хальхи вăхăтра унăн 130 единица пур (пуринчен ытларах пысăк мар суднăсем). 1941 çулта Канада флотне татах 100 единица ӳстерме пăхнă.

Австрали промышленноçĕ (Австрали территорийĕ—7,7 миллион тăваткăл километр, унта — 6,8 миллион çын пурăнать) 1914 çултипе танлаштарсан икĕ хут ытла ӳснĕ, уйрăмах металлургине машиностроени вăйлăн хăпарнă. Çар снаряженийĕ туса кăларасси те чылаях ӳснĕ, çĕнĕ предприятисене (авиазаводсене) хута ярса пынă май вăл уйăхран уйăхах ӳссе пырать.

1941 çулăн варринче Австрали çарĕнче 350 пин çын пулнă. Англие ямашкăн унта кайма кăмăл тăвакан çынсенчен экспедициллĕ корпуссем туса йĕркеленĕç.

Австралия — летчиксен кадрĕсене хатĕрлемелли пысăк центр. Унта летчиксемпе наблюдательсене 26 пин çын хатĕрлемелле.

Инди промышленноçĕ те (Инди территорийĕ — 4 миллион ытла тăваткăл километр, унта 370 миллион çын пурăнать) чылаях малалла кайнă. Индин, пысăках мар пулсан та, хăйĕн металлурги тата машиностроительнăй база пур, вĕсем вăрçă хатĕрĕсем туса кăларма питех те кирлĕ. Индири промышленноçра икĕ миллион рабочи ĕçлет (1913 çултинчен икĕ хут нумайтарах). Инди промышленноçĕ пĕтĕмĕшпех çар заказĕсене пурнăçласа пырать.

1939 çулта Англие Инди çарĕнче 300 пин çын пулнă, 1941 çулăн варринче — 500 пин çын ытла. Командирсен составĕ йышлă пулни Англипе Инди çарĕн хисепне 1,5—2 миллион çын таран çитермелемай парать. Англипе Инди çарне халĕ кучухнехи чи вĕрçĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантараççĕ.

Кăнтăр Африка Союзĕ (территори — 1,2 миллион тăваткал километр, 9,7 миллион çын пурăнать, вĕсенчен 2,1 миллионĕ — европеецсем) — Британи империйĕн вăйлă тĕрекĕ пулса тăрать. Унăн ролĕ халхи вăхăтра уйрăмах пысăк, мĕншĕн тесен Англин Африкăри мĕнпур владенийĕсене хӳтлесе тăрать. Иртнĕ вăрçă хыççăн кунта промышленность чылаях ӳснĕ, рабочисен шучĕ икĕ хут ытла ӳснĕ, двигательсен мощноçĕ — вунă хут ытла. Кăнтăр Африкăн ресурсĕсене Англия вăрçă валли вăйлăн мобилизацилет. Кăнтăр Африка ылттăн кăларас тĕлĕшпе тĕнчере пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать. Кăнтăр Африкăра взрыв тумалли веществосем кăларас тĕлĕшпе тĕнчери чи пысăк предприятисем ĕçлеççĕ.

Британи империйĕн чĕртавар ресурсĕсем калама çук пысăк. Англин нефть, никель, пăхăр, шурă тăхлан, хура тăхлан, каучук ытлашшипех пур.

Британи ресурсĕсене мобилизациленисĕр пуçне Англия США паракан пулăшупа анлăн усă курать. Çак пулăшу вăл уйрăмах хальхи вăхăтра калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. США паракан пулăшу çине таянса, Англия империн çынсем тĕлĕшри тата материаллă вăйсене мобилизацилеме юрăхлă вăхăтпа усă курнă.

Гитлерăн планĕсем, Англи тĕлĕшпе сывлăшра хуçа пулса тăмалли, унăн тинĕсри хăватне пĕтерсе тăкмалли тата ăна капитуляци тутармалли планĕсем — арканса кайнă. Гитлер, тупикĕ кĕрсе ӳкнĕ, ССР Союзне хирĕç юнлă авантюра пуçларĕ. Анчах кунта вăл хăйне валли вилĕм тупать.

П. ПОЛЯК.
Экономикăллă наукăсен кандидачĕ.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен августăн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информацийи Бюровĕн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ гитлерла бандитсем аманнă красноармеецсене тата Германи çарĕ йышăннă районсенчи граждăнла халăха çавтери тискеррĕн асаплантарнине тата мăшкăлланине кăтартакан хăрушă фактсем çинче чарăнса тăнă.

Гитлерла бандитсен Львоври тискерлĕхĕсем çинчен Совет Информаци Бюровĕ кăтартнă фактсене хирĕç, Германири информаци бюровĕ, вăрă-хурахла ĕçсем, пусмăрланисем тата вĕлерӳсем çинчен нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен сăрăвĕсемпе дневникĕсенче тата курнă çынсем кăтартса панисем — суя пĕлтерӳсем пулаççĕ тата «Германи салтакĕсем пырса кĕнине Львов халăхĕ чĕреренех саламланă», тесе яланхи пекех цинизмла ответлерĕ. Нимĕç бандичĕсене тата вĕсене пытарса тăракансене итлес пулсан, Львовра нимĕнле тискерлĕхсем те пулман темелле тата эпир Германин «ним айăпсăр» çарне ахалех хурланă пек пулса тухать. Анчах Германин пĕтĕм çарне намăса кăларакан вĕçĕ-хĕррисĕр тискерлĕхсене Геббельсăн нимĕнле заявленийĕсем те ӳпĕнтерсе хурас çук.

Çĕршер çулсем хушшинче этемлĕх вăрçа вăхăтĕнче салтаксемпе çапăçнине, мирлĕ халăха вăрçă ĕçĕсен тулашĕнче хăварнине курма хăнăхнă. Гитлер çакна пĕтĕмпех ӳпĕнтерсе хучĕ. Хулана е района çавăрса илсенех, коричневăй бандитсем патриотсемпе патриотăкĕсене тытма, вĕсене асаплантарма, пере-пере пăрахма тата тем тĕрлĕ пусмăрлама тытăнаççĕ, çав вăхăтрах, çак шайккăна тивĕçлĕ цинизмпа, вилесен куписене «ГПУ жертвисем» тесе пĕлтереççĕ, фашистсен пресси вара хăйсен жертвисен виллисем çинче ирĕçĕ ташă пуçлать.

Фашистсен тискерлĕхĕсем этем ăсхакăлăн тулашне тухаççĕ, вĕсем выльăхсен тĕнчин рамкисенче те вырнаçаймаççĕ — вăл хамствăна, садизма, вĕçĕ-хĕррисĕр тискерлĕхе, хаярлăха, пĕчĕн пулсăшăн çуннине пĕрлештерсе, «аслă раса» çинчен тата коричневăй чуман «цивилизаторла миссийĕ» çинчен философла пакăлтатнисене хушса тунă çавтери ирĕçĕр япала, — ăна Гитлер, Геббельс, Гиммлер, Геринг тата вĕсен уголовлă çӳп-çапсен купин философĕ Розенберг çеç тума пултарнă.

Вăрçăсем ахаль те халăх массийĕсемшĕн инкек пулса тăраççĕ. Анчах Гитлер çак инкеке тунă хут ӳстерме тата нимĕçсен çарĕнчен бандитсен, пусмăрăсен, çынвĕлеренсен, уголовлă преступниксен тата пĕчĕк хĕрачасене пăсакансен çарĕ туса хурса, унăн ятне ĕмĕрлĕхех варалама ăс тупрĕ.

Вăрă-хурахла ĕçсем, вут тĕртсе çунтарнисем, хĕрарăмсене, стариксене тата ачасене вĕлернисем, хĕрарăмсене, хĕрсене тата пĕчĕк хĕрачасене вăйпа ирĕксĕрленисем, акă вăл — Гитлер çарĕ тунă ĕçсен списокĕ.

Этемĕн чи элементарлă туйăмĕсем çине те ютшăнса пăхакан çак икĕ уралла вылăхсене ăçтан илет-ха Гитлер? Çак салтак ятне те, этем ятне те илтме тивĕçсĕр бандитсене, çар çыннисен формине тăхăнăскерсене, кам вĕрентсе ӳстернĕ-ла? Ку вăл — Гитлерăн тата унăн шайккин «культурăллă» ĕçĕ. Вăрă-хурахла ĕçсене, ирĕксĕрленисене, пĕчченшĕрĕн пуяссине мухтани Гитлер тавра Германи обществин мĕнпур çӳп-çапĕсене пуçларса тăратнă. Совесть вырăнне чышкăсем, çынсене асап кăтартма тата вĕлерме пĕлни çеç кирлĕ пулнă, вара штурмовой тата охраннăй отрядсене çеç мар, гитлерла системăн политикăллă руководителĕсен шутне те кĕме май пулнă. Гитлеровецран фюрера йышăлла парăнса тăма çеç ыйтнă. Унăн вăл çынсене çаратма, вĕлерме, асаплантарма, хĕрарăмсемпе ачасене ирĕксĕрлеме пултарнă çак çӳп-çапсене аслă раса тенĕ, ăна хуть те мĕн тума та ирĕк панă. Вĕсем мар законсене пăхăннă, законсене хăйсене вĕсем валли тунă.

Çапла Гитлер 300 пин шанчăклă çын—уголовнăй ĕçсене пĕрле тунине тата хăйсен хăрушла преступленийĕсемшĕн тавăрасран хăранине пула унпа сыхăннă охранниксемпе штурмовиксене, вăрă-хурахла ĕçсемпе вĕлерӳсене, арех ĕçсе супассипе аскăнлăха — пурнăç тĕлĕвĕ тата тĕп шухăшĕ вырăнне хураканнине идеалсемĕр çынсене пăхса çитĕнтернĕ.

Çак ирĕçĕрсем мĕнле пурăнни Гитлер салтакĕсемпе офицерĕсенчен турттса илнĕ çырусемпе дневниксенчен курăнать. Готфрид Вернер лейтенантăн арăмĕ, Лота, хăйĕн упăшки патне фронта çапла çырать:

«Мĕнле те пулин вараланчăк еврейран ăшă çăмлă пальто туртса илме пултараймастăн-и? Вĕсен шайкки унăн аптăрас çук. Российăра ун пек япаласем нумай, теççĕ. Çавăн пекех костюм тумалли матери çинчен те анман. Çавнашкалах мĕн те пулин организацилесси е кӳрсе килесси çинчен шухăшласа пăх: вăл сволоча нимĕн те хĕрхенме кирлĕ мар вĕт. Халăхи япăх вăкăтсемшĕн вăл кăшт та пулин компенсаци пулĕччĕ. Кунта эпĕ, темĕн чухлĕ тăрăшсан та, костюм валли йĕркеллĕ материал тупма пултараймастăп».

Çепĕç те поэтикăллă Лота хăйĕн Вернерĕ патне çапла çырать.

Хĕвеланăçĕнчи çăмăл çĕнтерӳсем хыççăн çак бандитсем ССР Союзне мĕншĕн кирли питех те палăрать. Анчах Совет Союзĕ фашистсен шăлĕсемшĕн ытла та çирĕп мăйăр пулчĕ. Вĕсем Берлинран Мускав патне церемониальнăй маршпа пырса çитме ĕмĕтленнĕчĕ, çав хушăрах хăйсем халех ĕнтĕ пĕр миллион çурă ытла çын çухатрĕç, анчах Мускав патне çитиччен çаплах инçе-ха. Хăйсен тарăхăнне вĕсем халăх çинче тавăраççĕ, ирĕксĕрлесе çӳрекен çак çынсем—«гевальттрегерсем»—мĕн тунине сăмахпа каласа пама та çук.

Гитлер тата унăн подручнăйĕсем: çĕнтерӳ пур преступленисене те витсе хурать, Германи çарне хăйĕн усал ĕçĕсемшĕн юнлă хуçăуль тăкса тӳстерме пултаракан вăй тĕнчере çук, тесе шутланă. Çĕнтерӳ лаврĕсем халăхсем умĕнче пусмăрçăсен ирĕçĕр сăн-сăпатне пытарса хурĕç тата вĕсене хăйсем хыççăн мĕнпур çĕршывсене хирĕсле похода ертсе кайма тата çав майпа хăйсен усал ĕçĕсене тĕрĕсе кăларма май килĕ, тесе шутланă Гитлер. Анчах вăл йăнăшрĕ.

Гитлер бандичĕсен суранланнă красноармеецсем, командирсем тата политработниксем тĕлĕшпе тунă усал ĕçĕсене эпир нихăçан та манас çук, граждăнла халăха çаратнисемпе вĕлернисене эпир нихăçан та манмăпăр, çак вараланчăк вылăхсене вĕсем питрĕн шаттăр хĕрарăмсене пусмăрланисене тата мăшкăлланисене эпир нихăçан та каçарас çук.

Ĕлĕххи германоецсен туррине Ватана пуççапакан тата хăй пĕтĕм тĕнчипе пуçпулса тăрассишĕн антăхнине пурнăçа кĕртме миллионшар çынсен пурнăçне тĕп тăвакан Гитлер шансах тăма пултарать: ăна тавăрасси инçетре мар. «Куçшăн куç, шăлшăн шăл» тесе калакан библи законĕ пире çырлахтармасть. Гитлерпа унăн шайкки этемлĕхе хирĕç çавтери нумай ирĕçĕ те хăрушла преступленисем тунă, вĕсем хăйсен ĕçĕсемшĕн çак коричневăй садистсем ăнланма пултаракан ăрасна йышши пĕртен-пĕр закон тăрăх, «пĕр куçшăн—иккĕ, пĕр шăлшăн—пĕтĕм пуçна» текен закон тăрăх тавăру туянĕç.

* * *

Суранланнă красноармеецсене, командирсене, политработниксене тата Германи çарĕ йышăнса илнĕ совет районĕсенчи граждăнла халăха фашистсем мĕнле тискер тытни çинчен, Информаци Бюровĕн сводкисем çумне хушса, пур корреспондентсене те татах нумай материалсемпе фотографиесем салатса панă.

Августăн 12-мĕшпе 13-мĕш хушшинче çĕрле нимĕç самолечĕсем Мускав çине вĕçсе килме хăтланни

Августăн 12-мĕшпе 13-мĕш хушшинче çĕрле нимĕç самолечĕсен групписем Мускав çине вĕçсе килме хăтланнă.

Зенитнăй батарейăсем лайăх перспе тата пирĕн çĕрлехи истребительсем тапăнса тăшман самолечĕсене салатса янă, вĕсене Мускав патне çитермен.

Совет авиацийĕ Берлин районĕ çине тапăнни çинчен ютçĕршывсенчи хаçатсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, августăн 11-мĕш. (ТАСС). Совет авиацийĕ Берлин районĕ çине пыра-пыра тапăнни Лондонра пысăкăн хумхантарнă, унта пичет, радио тăрăх çине тăрсах комментарисем параççĕ. «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат çапла палăртать: вырăс авиацийĕ Берлин çине малтанхи хут тапăнни немĕçсемшĕн кĕтмен япала пулса тăнă. Вырăссен гигантла бомбардировщикĕсем Берлин таврашĕнчи предприятисем тата электростанцисем çине бомбăсем пăрахнă, «Дейли мейл» хаçат Германин сывлăшри обороницĕн те совет авиацин тапăнăвĕ кĕтмен çĕртен пулнă, тесе çырать тата совет летчикĕсен пысăк мастерлăхне, çавнашкалах совет самолечĕсем бомбăсене пит тĕл пăрахнине палăртать.

«Ньюс кроникл» хаçат хăйĕн умстатьинче совет авиацийĕ Берлин çине çăмăлăн пыра-пыра тапăннине пысăкăн хаклать. Хаçат çапла палăртать: немĕçсем малтан совет самолечĕсем Берлин çине бомбăсем пăрахнă факта пытарма пăхнă, анчах вĕсен каярахпа çав факта йышăнмалла пулнă.

Берлинецсем, — вĕсене малтан сывлăшран тапăнас хăрушлăх пулас çук тесе шантарнă, — халĕ ĕнтĕ столица çине Англи авиацийĕ те, совет авиацийĕ те тапăнма пултарнине пĕлсе тăраççĕ. Çакă вара психологи енчен питех те кирлĕ факт пулса тăрать, вăл немĕçсен моралĕ çине пысăк влияни парать. Пичет тата радио Берлин çине пыра-пыра тапăнни совет авиацин вăй-хăватне, Германи пропаганди Совет Союзăн сывлăш çар вăйне пĕтерсе тăкни çинчен суйса, мухтанса пĕлтернине тăрă шыв çине кăларнине кăтартса парать, тесе хаклаççĕ.

СТОКГОЛЬМ, августăн 11-мĕш. (ТАСС). Стокгольмри хаçатсем совет авиацийĕ Берлин çине пыра-пыра тапăнни çинчен Мускаври радио пĕлтернине курăнмалли вырăна пичетленĕ. Чылай хаçатсен Берлинри корреспонденчĕсем совет самолечĕсем бомбăсем пăрахнине Берлинра çине тăрсах пытарма пăхнă, тесе каласа параççĕ.

«Стокгольмс тиднинген» хаçат Берлин çине пырса тапăнни çинчен çапла çутатса парать: тревога пачах яланхи пек мар пулнă. Хулан çурçĕр пайĕнче бомбăсем çурăлса взрыв пулличченех мотор сасси пулман. Бомбăсем ӳкнĕ хыççăн кăна сывлăшри тревога сигнальне панă. Зенитнăй артиллери тапăнуран сыхланас ĕçе хутшăнма та ĕлкĕреймен.

Франципе лару-тăру çивĕчленсе çитнĕ

БЕРН, августăн 11-мĕш. (ТАСС). Июлĕн 29-мĕшĕнче Германи правительстви Виши правительстви умне чылай требованисем кăларса тăратни, çав требованисем тăрăх августăн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр ответ памалыйтни çинчен пĕлтернĕччĕ. Германи ультиматумĕ Алжирта, Касабланкăра, Дакарта Германин çар базисене тума пăхать.

Кунта, — тесе кăтартса параççĕ — Франци пĕтĕмпех Германи çине куçас тĕлĕшпе Виши правительствинчи кучухнехи диктатор адмирал Дарлан Германи майлă тăрать. Анчах унăн ĕçĕсене халăхăн тĕрлĕрен сийĕсем протестлеççĕ. Правительствăра генерал Вейган Дарлана хирĕç тăнă. Вăл Франци правительствин Африкăри тата Алжир генерал-губернаторствинчи ĕçĕсен генеральнăй делегачĕ пулса тăрать.

Германи влаçĕсем Францин халăхĕн Петăн ертсе пыракан правительствин икĕ шухăшлă политика тытса пырассине пĕтерме ыйтаççĕ. Вишире лартăру питех те çивĕчленсе çитнĕ.

Августăн 9-мĕшĕнче çĕрле кунта официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: правительствăн пухма палăртнă лару-тăру августăн 11-мĕшне куçарнă, çапла вара Германи влаçĕсем хăйсен ультиматумĕ тăрăх палăртнă срокчен — августăн 10-мĕшĕччен ответ илеймен.

Çав кун, — тесе пĕлтерет Гавас-ОФИ агентстви, — Вишире, Петăн резиденцийĕ тăракан сĕтел умĕнче «тăтăшах нумай йышлă халăх пухăнса тăнă». Паян Вишире, Лионра, Марсельре тата Францири ытти нумай хуласенче те халăх масси шикленсе пăлханать. Дарлан тата ăна витсе тăрса пулăшакансем Вишири хальхи правительствăн ертсе пыракан составне хирĕç переворот тума пултараççĕ, тесе шикленеççĕ.

Срокчен тӳлесе татаççĕ

ИШЛЕЙ. Районри колхозсенче колхозниксен производствăллă çĕкленĕвĕ пур ĕçре те вăйлăн сарăлса пырать.

Ямайкасси ялсоветĕнчи колхозниксем ыраш вырнă çĕрте пысăк хастарлăхпа ĕçленĕ вăхăтрах, Хĕрлĕ Çара ытти енпе те пулăшаççĕ. Колхозниксем ялхуçалăх налогĕпе страховка укçине срокчен тӳлесе татаççĕ. «Хĕрлĕ çăлтăр» колхозри Ф. Михайлов колхозник ялхуçалăх налогĕпе страховка укçине, извещенисем илнĕ хыççăнах, пĕтĕмпех тӳлесе татрĕ.

С. ГОРЛАНОВ.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, августăн 12-мĕш. Рейтер агентстви Англин авиаци министерствин коммюникине парать, унта çапла каланă: августăн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин хăнăр-хĕвеланăç çыранĕ тĕлне противникăн пĕр самолечĕ кăна вĕçсе пынă. Бомбăсем пăрахман.

Авторитетлă вырăнсенчен илнĕ сведенисем тăрăх, августăн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Хĕвеланăç Германири вăрçă объекчĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. (ТАСС).

ЛОНДОН, августăн 12-мĕш. Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: августăн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Дюссельдорф сывлăхĕнче Крефельд тата Рейдт çине, çавăн пекех Мюнхен-Гладбах çине пырса тапăннă. Рейдтра Эдельштейн завочĕсем—специальнăй хурçăсен тата ферросплавсен центрĕ вырнаçса тăрать. Çĕрле пырса тапăннă хыççăн августăн 12-мĕшĕнче ирхине Англи бомбардировщикĕсемпе истребителĕсем Ла-Манш проливĕ урлă вĕçсе каçса Çурçĕр Франци çине тапăннă. Тепĕр сехетрен Англи самолечĕсем çухатусем тумасăрах хăйсен базисене тавăрăннă.

США-ран илнĕ «Хэнок» йышши истребительсем çĕрле Çурçĕр Францири тата Голландири аэродромсем çине тапăннă çĕре хутшăннă, çав аэродромсенче пушарсем тухнă. (ТАСС).

Республикăри уйхирсенче

Вăрман хĕрринчи ыраш пуссинче

Ялтан тухсанах ыраш уйĕ. Сарлака вăл. Тепĕр енчен ăна вăрман кӳпăрласа тăрать. Пĕр ик-виçĕ кун каялла кăна вăл симĕс сăнлăн кăтартатчĕ. Паян ак пĕтĕм уйĕпех урăх сăн çапнă—пулса çитнĕ пучахсем ылттăн тĕслĕн çуралса лараççĕ. Мĕнле илемлĕ вĕсем çине пăхма. Пĕр пучахне те ахаль сая ярас килмест. Кашни колхозник, кашни иртен-çӳрен çын ун çине пăхать те савăнса каять.

...Лайăххăн тул çутăлса çитмен-ха. Таврара нимĕнле сас-чӳ те илтĕнмест. Вăрманта кăна кайăк-кĕшĕксем чĕвĕлтетеççĕ. Анчах «14 лет Октября» колхоз членĕсем ыйхăран вăраннă. Вĕсем пулса çитнĕ ăраша вырма кайма васкаççĕ.

Артюков юлташ ертсе пыракан Ш-мĕш бригада членĕсем вăрман хĕрринчи айлăма вырнаçрĕç. Унтан инçех мар 1-мĕш бригада членĕсем. Хĕрӳллĕ ĕç пуçланчĕ. Çурла сасси çеç илтĕнет. Никамăн та кая юлас килмест.

— Ман шутпа, çак участока эпир паянах вырса тухатпăр пек туйăнать,—тет бригадир Мажуков юлташ.

— Вырса пăхар-ха, тен кăçченех пĕтерĕпĕр,—ответлеççĕ сасăсем.

Ĕç татах та хĕрӳллĕн, пысăкрах хастарлăхпа сарăлса пырать. Çӳлте, тӳпере сарă хĕвел пĕçертет. Вăл хăпарнăçемĕн хăпарсах пырать. Сывлăш таса та ӳтлă. Сайра-хутра пиртăмартине ăшă çил кăтăкласа илет. Мĕнле аван, мĕнле илемлĕ кун пек чухне аслă уйхирте ĕçлеме!

...Ĕç кунĕ вĕçленет. Таврана каçхи сăн карса илет. Савăнăçлă колхозниксем бригадăн-бригадăн пĕр çĕре пухăнаççĕ. Бригадирсем паянхи ĕçĕн хăшпĕр итогĕсем çинчен каласа параççĕ. Результатсем ăшă мар. Кашни бригада хăй умне лартнă задачăсене пурнăçланă. Уйрăм колхозниксем татах та паха тĕслĕхсем кăтартнă. Вĕсем хушшинче икĕ норма тунисем те пур. Акă вĕсем: Мария Мужакова, Екатерина Мальцева, Перасковья Петрова, Екатерина Лицавкина т. ыт. те.

* * *

«14 лет Октября» колхозра халь хĕрсех тырă выраççĕ. Çурла тытма, кĕлте çыхма пултаракансем пурте тырă вырма тухаççĕ. Вăтамран илсен, кашни кунах ĕçе 150 çынран кая мар тухать. Нитăшĕ те пĕр-пĕринчен юлашăк мар. Паян ĕнерхинчен лайăх ĕçленĕ пулсан, ыран вара татах та лайăхрах тĕслĕх кăтартассишĕн кĕрешеççĕ.

Ш-мĕш бригада членĕ Агриппина Мигунова тырă вырма тухсан малтанхи кунĕнчех хăйĕн ĕç нормине 160 процент тултарнă, унтан ăна 2,45 ĕçкунĕ тивет. Иккĕмĕш кунĕнче нормăна 167,5 процент тултарнă. Анна Антонова, Надежда Шарасыкина, Ольга Антонова, Перасковья Мартынова колхозницăсем те хашни кунах нормăсене 150—160 процент тултараççĕ.

Иртнĕ çулхине 1-мĕш бригада тырпула ытти бригадăсенчен темиçе кун малтан вырса пĕтерсе ытти бригадăсене пулăшма кайнă. Кăçал та ку бригада членĕсем тырпула кĕске срокра пустарса кĕртессишĕн кĕрешеççĕ. План тăрăх, бригадăн ыраша 5 кун хушшинче вырса пĕтермелле. Бригадир Я. Мажуков юлташ калаçнă тăрăх, вĕсем ăна малтанхи пустарса кĕртеççĕ.

Чăнах та, Мажуков юлташ бригадин членĕсем пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Комсомолка Катя Луцавкина малтанхи кунĕнче алăпа вырса 380 кĕлте тунă. Ытти кунсенче хăвăртлăхсене ӳстерсех пынă, августăн 8-мĕшĕнче вăл 470 кĕлте тума тултарчĕ. Катя Мальцева, Маруся Мажукова, Шура Николаева колхозницăсем те паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Ватă колхозник Григорий Мальцев алăпа вырмалли нормăна 120—150 процент тултарать.

Тырă вырнă çĕрте вĕренекенсемпе учительсем активлăн ĕçлеççĕ. Акă 5—6-мĕш классенче вĕренекенсем Ваня Тырлаков, Маруся Федярова, Оля Пастухова, Федосия Лицавкина, Ваня Ялков, Вася Николаев ир пуçласа кăçченех тырă вираççĕ, вĕсенчен чылайĕшĕ пысăк çын норминех тултараççĕ. Учительница Красильникова тата Майоров юлташсем колхозниксем канă хушăра хаçат-журналсем вулассине, стена хаçачĕсем кăларса тăрассине йĕркеленĕ.

Колхозра халь хĕрсех авăн çапаççĕ, государствăна тырă леçсе параççĕ.

Хăр. ЛИСИН.

Тăвай районĕнчи колхозсенче

Кĕршери «Свободный труд» колхозра И. Машенкина юлташ ертсе пыракан звено пур ĕçсенче те мала тухса пырать. Унăн звени тырпула пухса кĕнĕ çĕрте те пысăк хастарлăхпа ĕçлет. Звено кулленхи нормăна 250-шар процент тултарать. Çакăн пек хăвăртлăхпа ĕçлени—ĕçе тĕрĕс организациленинчен, ĕç дисциплини çирĕп пулнинчен килет. Колхозниксем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Ирхине ирех ĕçе тухаççĕ, каçхине тĕттĕм пулмасăр ĕç пăрахмаççĕ.

Тĕмерти Смидович ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те ĕçĕн пысăк тухăçлăхне хăтартаççĕ. Тырă вырнă çĕрте ĕç нормине тултарайман пĕр колхозник те çук, пурте иртерсе тултараççĕ. 7-мĕш бригадири колхозницăсем Е. Кучерова, И. Кучерова, Е. Бельская, М. Зайцева юлташсем кулленхи нормăна 137 процент, 5-мĕш бригадăра ĕçлекен колхозницăсем 120-шер процент тултарса пыраççĕ.

Çак колхозра учительсем те уй ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Вăтам шкулти учительницăсем Ф. Кузьминапа Тимофеева юлташсем çăвĕпех колхозра ĕçлерĕç. Халĕ те вĕсем тырă вырма кулленех тухаççĕ.

В. ДАНИЛОВ.

Ыраш вырнă çĕрте

СЕНТĔРВАРРИ. Çак кунсенче районри чылай колхозсем ыраш вырма тухрĕç. Ыраш вырма чи малтан Новинскри Сталин ячĕпе тăракан колхоз тухрĕ. Кунта колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ пысăк. Тырă вырма, вăйпитти çынсемпе пĕрлех, ватă колхозниксемпе çамрăк ачасем те тухаççĕ. 4-мĕш бригадири А. П. Моряхова звенинче ĕçлекен колхозница М. Гаранина 68 çула çитнĕ (унăн икĕ ывăлĕ Григорий тата Василий Хĕрлĕ Çарта), хăй ватă пулсан та, ĕçе кашни кунах тухса, çынсемпе танах ĕçлет. Çак звенорах тата М. Колесова, О. Домина колхозницăсем те ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Тырă вырма тухсан иккĕмĕш кунĕнче жнейкăпа ĕçлеме тытăнчĕç. Жнейкăпа комсомолец Борис Шолин ĕçлет.

Колхозниксем каннă вăхăтра агитаторсемпе тĕлеçсем хаçат вуласа параççĕ. Ку ĕçе ятарласа уйăрнă чтецсем Гусевăта Малькова юлташсем туса пыраççĕ.

Тутаркассинчи «Моряк» колхоз членĕсем те ыраш выраççĕ. Кунта 4 бригади те ыраш вырма тухнă. Колхозниксем ирех пуçласа, шăп каçченех уйра хĕрсе ĕçлеççĕ. Колхозра ялсĕ тата ачасен площадки ĕçлет. Унта пурĕ 50 ача ытла çӳреççĕ.

В. ИВЛЕВ.

„Хунав“ колхоз ыраш вырса пĕтерчĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Виçĕмӳртри «Хунав» колхоз августăн 9-мĕшĕнчех ыраш вырса пĕтерчĕ. Тырă вырнă çĕрте ĕçе тĕрĕс организациленĕ. Ĕçлеме пултаракан колхозниксем пурте тырă вырма хутшăнаççĕ. В. Махмутова колхозница кунне 400-шер кĕлте, Жукова 475-шер кĕлте вырса сыхнă.

Бригадăсенче тырă вырма тухнă кунранах агитациллĕ-массăллă ĕçе сарса янă. Уйрах хаçат-журналсем вулассине, стена хаçачĕсем кăларса тăрассине йĕркеленĕ.

Колхозра халь хĕрсех авăн çапаççĕ, государствăна тырă леçсе параççĕ.

Н. ВИНОГРАДОВ.

Çĕнĕ тырра йышăнма хатĕр

Иĕпреçри хатĕрлев пункчĕ çĕнĕ тырра йышăнма хатĕрленсе çитрĕ. Складсене пурне те кăсаса дезинфекциленĕ. Тарасасемпе тырă тасатмалли машинăсем çителĕклĕ.

Çак кунсенче малта пыракан колхозсенчен чылай тырă йышăннă. Хатĕрлев пунктĕнче столовăй тата хĕрлĕ кĕтес уçнă. Тырă леçме пыракан колхозниксене оборона ĕçĕпе паллаштарас тĕлĕшпе ПВХО тата ГСО кĕтесĕсем организациленĕ, унтах витрина пур. Тĕрлĕ темăсем тăрăх каласусем иртнине палăртнă. Малтанхи кунсенче тырă леçме пыракансем хушшинче «Тыл и фронт в современной войне», «Почему Гитлер должен потерпеть поражение», «Сталин как великий полководец», «Фашизм—лютый враг человечества» темăсемпе каласусем иртнине пăхнă.

В. АНДРЕЕВ.

Кĕраки тума 34 колхоз тухнă

ЭЛĔК, августăн 13-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Паян 12 колхоз ыраш вырса пĕтереççĕ. «Пионер», «Красное Сормово» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тырăсене пысăк пахалăхпа вырса пуçтарчĕç. Чылай колхозсем авăн çапма тытăннă. «Труд» колхоз ыраша авăна хурса типĕтсе çапать.

Августăн 12-мĕшĕнче «XVI партсъезд», «Зерно» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тырăсем акма тухрĕç. Паян 34 колхоз акма пуçланă.

А. ВОЛКОВ.

Райçĕрĕç отделĕн заведующийĕ.

Кĕрхи тырăсем акаççĕ

ЕТĔРНЕ, августăн 13-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Районри малта пыракан колхозсем кĕрхи тырăсене акма тухрĕç. Августăн 12-мĕшĕнче Мăн Шĕмĕртенри «Ленин хушăвĕ» колхоз 10 гектар, Туршайри Киров ячĕпе тăракан колхоз 4,5 гектар ахрĕç. Паян Стрелецкри Буденный ячĕпе тăракан колхоз тата «Новый путь», «Красный пахарь», Крупская тата Киров ячĕпе тăракан колхозсем акма пуçларĕç.

ЛЬВОВ.
СОРОКИН.

Ĕç тухăçлăхĕ пысăк

Районри пур колхозсем те ыраш вырма тухнă. Ĕç вăйне малтанхи кунранах тĕрĕс организациленĕ колхозсенче ĕç тухăçлăхĕ хăпарсах пырать. Кĕçĕн Чураш колхозĕнчи Мартяшов колхозникăн звени пĕр кунхи ĕç нормине 6 сехет хушшинчех тултарнă. Çакăн пек тĕслĕхсене ытти колхозсенче те нумай курма пулать. Никольск колхозĕнчи Кузнецовна Блохин юлташсем августăн 5-мĕшĕнче 4 сехет хушшинче пĕр кунхи нормăна 103 процент тултарнă.

Ватă колхозниксем те ĕçĕн пысăк тухăçлăхне кăтартса ĕçлеççĕ.

Кăçал районĕпе мĕнпурĕ пиншер гектар кĕртырри пухса кĕртмелле. Çак ĕçе пурнăçланă çĕрте 101 жнейка, 8 комбайн, 540 çава, 7 пин ытла çурла ĕçлеççĕ. Колхозницăсен ĕçне çăмăллатас тĕлĕшпе 44 ялсĕ, ача сачĕсене 34 уçнă. Пур колхозсенче те столовăйсем ĕçлеççĕ.

А. ЧЕХОНИН.

Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем параççĕ

ÇЕМĔРЛЕ. Районри пур колхозсем те государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçласа тăшмана хăвăртрах çапса аркатма хамăрăн Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Турханти «Комбинат» колхоз иртнĕ çулхи тырăран государствăна 579 центнер тырă парса 1941 çулти обязательствăна ытлашшипех тултарчĕ. Чăваш Улхашри «Искра» колхоз та обязательнăй йĕркепе государствăна 3.598 штука çăмарта, 3.867 литр сĕт панă. «Путь Ленина» колхоз сĕт памалли плана вичĕ хут иртерсе тултарчĕ. Колхоз государствăна тырă, çăмарта, аш-какай памалли обязательствăсене ытлашшипех пурнăçларĕ. Улхаш ялсоветĕнчи «1-ое Мая», «Подборное» колхозсем те хăйсен обязательствисене тултарнă хыççăн, государствăна 100-шер штука çăмарта панă.

Х. Л.

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Нумай колхозсем государствăна утă парса татнă. Хĕрлĕ Чутай колхозĕн государствăна 106 центнер утă памалла пулнă пулсан, вăл 129 центнер леçсе панă. «Профинтерн» колхоз 1 центнер, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 23 центнер утă ытлашши панă.

Государствăна аш-какай парасси те ăнăçлăн пырать. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз, «Коминтерн», «Красное Сормово», «Самолет», «Мотор», «Красный маяк», «Пятилетка», «Агроном», Карл Маркс, Киров ячĕпе тăракан колхозсем 1941 çулăн государствăна аш-какай парса татнă.

А. НИКИТИН.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

К СВЕДЕНИЮ

поступающих в Алатырский учительский ИНСТИТУТ

В связи со слиянием Алатырского Учительского Института с Чувашским Государственным Учительским Институтом все желающие поступить в Учительский Институт должны направлять заявления в адрес Чувашского Пединститута: г. Чебоксары, улица Карла Маркса, дом № 80.

Приемные испытания начинаются 15 августа. Заявления можно подавать и лично явившись на испытания.

Дирекция.

3—3

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5528.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии 0,84 п. л.